Чебоксары
[illegible]

1937
ДЕКАБӖР
7
ЫТЛАРИКУН
279 (4791)-мӗш №

Пӗр №-рӗ 10 пус
19-мӗш ҫул тухать.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммунӗ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ

Редакципе кантур адресӗ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—6
Ред. заместителӗн 0—8
Редакци секретарӗн 4—4
Дежурнӑйӑн 6—2

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче—пурте ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама!

Ҫӗнтерӳсене ӗмӗрлӗхех ҫирӗплетнӗ

(Сталинла Конституцине йышӑнни 1 ҫулталӑк тултарнӑ йатпа Шупашкарта декабӗрӗн 4-мӗшӗнче пулнӑ савӑнӑҫлӑ ларуран)

Социалисӑм ҫӗршывӗн Конституцине йышӑннӑ кун—декабӗрӗн 5-мӗшӗ—пӗтӗм халӑхӑн, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен уйавӗ пулса тӑчӗ.

Чӑваш республикин столицинчи ӗҫҫыннисем Конституци кунне пысӑк хаваслӑхпа уйавласа иртерчӗҫ.

Декабӗрӗн 4-мӗшӗнче, каҫхине, Чӑвашсен Государствӑ академилӗ театрӗнче Чӑваш АССР Тӗпӗҫтӑвкомӗпе Шупашкар хула совечӗн, ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе хула комитечӗн Шупашкар ӗҫҫыннисемпе пӗрле пухӑннӑ чаплӑ ларӑвӗ пулса иртрӗ.

Театр халӑхпа, ҫутӑпа, савӑнӑҫпа тулнӑ. Мачча сирӗлес пек кӗрлет кунта алӑ ҫупни, урра кӑшкӑрни, „Интернационал" йурлани. Кунта калакан сӑмахсем ҫирӗппӗн те хӑйулӑн, савӑнӑҫлӑн та ҫӗкленӳлӗн йанӑраҫҫӗ.

Президиума чӑваш правителствипе хула совечӗн, ПСК(б)П Обкомӗпе хула комитечӗн членӗсем тухаҫҫӗ. Вӗсем хушшинче Мускавран ирхине килсе ҫитнӗ Алексей Иванович Стецкий й.,—ПСК(б)П Тӗпкомӗн парти пропагандипе агитаци пайӗн заведуйушчийӗ, Национаљнӑҫсен Советне депутата суйлама Шупашкар суйлав округӗ тӑрӑх палӑртнӑ кандидат. Залӑри халӑх президиум членӗсене тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илчӗ.

Чаплӑ ларӑва Чӑваш АССР Тӗпӗҫтӑвкомӗн председателӗ З. А. Андрейева йулташ уҫрӗ.

— Ҫулталӑк кайрах,—терӗ Андрейева йулташ хӑйӗн сӑмахӗнче,—Пӗтӗм Союзри советсен VIII-мӗш Чрезвычайлӑ Сйесӗ тӗнчери чи демократилӗ Конституци йышӑнчӗ. Пирӗн ҫӗршыври халӑхсем ӑна Сталинла Конституци терӗҫ, мӗншӗн тесен, ӑна, ҫав аслӑ Тӗп саккуна Сталин йулташ алли те ҫырнӑ. Ҫавӑнпа та пирӗн пайан малтанхи саламлӑ сӑмах—Конституци туса паракан аслӑ ҫулпуҫӗ, учителӗ Сталин йулташ патне. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Халӑх тӑшманӗсем темӗнле урса сиксессӗн те, фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла, буржуалӑ националисла бандичӗсем темӗнле ирсӗр ӗҫсем тусан та, вӗсем Совет ҫӗршывӗ коммунисӑм патне ҫӗнтерӳлӗн пынине тытса чараймӗҫ. Конституци пирӗн ҫитӗнӳсене ӗмӗрлӗхех ҫирӗплетсе, иксӗлми саккун туса пачӗ.

Сталинла Конституци пӗтӗм тӗнчене хускатрӗ. Ӗҫҫыннисемшӗн вӑл кӗрешме, ҫӗнтерме чӗнекен йурӑ пек йанрса кайрӗ, ҫынна пусмӑрлакан классемшӗн, фашисӑмшӑн—вӑл вилӗм приговорӗ пулса тӑчӗ.

Хисеплӗ президиума тӑвӑллӑн алӑ ҫупса Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Андрейев, Микойан, Чубарь, Косиор, Жданов, Йежов, Тельман, Хозе Диас йулташсене суйларӗҫ.

Сталинла Конституцине йышӑнни ҫулталӑк тултарни ҫинчен чаплӑ ларура ПСК(б)П Тӗпкомӗн парти пропагандипе агитаци пайӗн заведуйушчийӗ, Национаљнӑҫсен Советне депутата суйлама Шупашкар суйлав округӗ тӑрӑх палӑртнӑ кандидат А. И. Стецкий йулташ доклад туса пачӗ.

Стецкий йулташ трибунӑ ҫине тухсан, пӗтӗм залӑри халӑх ура ҫине тӑрса, нумайччен алӑ ҫупать. Залӑран: „Сывӑ пултӑр аслӑ Сталин!", „Сталин йулташӑн шанчӑкла ученикне—Стецкий йулташа урра!", „Сывӑ пултӑр Сталинла Конституци!" тенӗ сасӑсем илтӗнсе кайаҫҫӗ.

Сталинла Конституци кӗрешӳре, совет халӑхӗн паттӑрлӑ ӗҫӗнче ҫуралса ӳссе ҫитӗнни ҫинчен, вӑл халь никам ҫӗмӗрейми социалисӑм стройӗн Тӗп. Саккунӗ пулса тӑни ҫинчен Стецкий йулташ, пирӗн аслӑ партин ҫулӑмлӑ пропагандисӗ, агитаторӗ, пурте йӑнланмала, тулли хаваслӑ сӑмахсемпе каласа пачӗ. Ҫулӑмлӑ сӑмахсене радио пӗтӗм республикӗпе саратӗ. Чӑвашсен академилӗ театрне пырайман ӗҫҫыннисем хӗрлӗ кӗтессенче, клубсенче, ытти театрсенче, хватерсенче репродукторсем умне пухӑнса итлеҫҫӗ. Кино-театр залинче 700 ҫынна йахӑн пухӑннӑ. Хресчен ҫурчӗ, сыхӑну ҫурчӗ... пӗтӗм республикӑ шӑплансах итлет хаклӑ сӑмаха.

Стецкий йулташ, хӑйӗн кандидатурине Аслӑ Советӑн Национаљнӑҫсен Советне депутата суйлама Шупашкар Суйлав округӗ тӑрӑх палӑртни ҫинчен сӑмах пуҫласан ҫапла каларӗ:

— Мана Шупашкар ӗҫҫыннисем ҫакӑн пек пысӑк шанчӑка хуни чӗререн хумхантарса савӑнтарать. Епӗ, мана Аслӑ Совета суйлама кандидата тӑратнӑ организацисене пӗтӗм кӑмӑлран тав тӑватӑп. Епӗ, хамӑн мӗн пур вӑйхала Ленин—Сталин ӗҫне, халӑх ӗҫне, коммунисӑм ӗҫне пама тупа тӑватӑп.

Чаплӑ лару тӑвӑллӑн алӑ ҫупса, халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ патне саламлӑ ҫыру йама йышӑнчӗ. Стецкий йул. доклатне итлеме пынисенчен пӗри, Стецкий йулташран, Мускава ҫитсен, чӑваш халӑхӗн йачӗпе Сталин йулташа алӑ пама ыйтрӗ. Залӑ ҫӗнӗ хаваслӑхпа кӗрлесе кайрӗ.

Савӑнӑҫлӑн, хумханулӑн иртрӗ чаплӑ каҫ. Ку каҫа Шупашкар ӗҫҫыннисем нихҫан та манмӗҫ. Аслӑ Совета суйлама палӑртнӑ хӑйсен кандидачӗпе Стецкий йулташпа тӗл пулни йаланлӑхах асра йулӗ.

Суйлавҫӑсем Союз Советне депутата суйламали кандидатпа—мухтавлӑ трактористка П. Н. Ангелина йулташпа тӗл пулни

СТАРО-БЕШЕВО (Донецк облӑҫӗ), декабӗрӗн 3-мӗш (ТАСС). Амросийевск суйлав округӗнче ӗҫҫыннисен суйлав умӗнхи нумай ҫынлӑ митингӗсем пулса иртеҫҫӗ. Суйлавҫӑсем митингсемпе пухусенче Союз Советне депутата суйламали хӑйсен кандидачӗпе—ҫӗршывӑн мухтавлӑ трактористкипе Прасковйа Никитична Ангелинӑпа тӗл пулаҫҫӗ.

Каракубри извескӑ карйер управленин клубӗнче пухӑннӑ суйлавҫӑсем, пухура сӑмах тухса каланӑ П. Н. Ангелина йулташа хӗрӳлӗ саламланӑ.

— Манӑн пӗрремӗш сӑмах,—тенӗ Ангелина йулташ, — пире чи телейлӗ пурнӑҫ панӑ, пӗтӗм тӗнчери чи демократилӗ Конституци тунӑ, ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама епер палӑртнӑ пӗрремӗш кандидата—хамӑрӑн тӑван аттене—Сталин йулташа пулать.

Сталинла Конституци совет халӑхне ӗҫлев прави, канӑҫ прави, вӗренӳ прави пачӗ. Сталинла Конституци пире, хӗрарӑмсене, арҫынсемпе пӗртанах суйлас тата суйланас прави пачӗ.

Епӗ, батрак пулнӑ ҫынӑн хӗрӗ, грек ҫыннин хӗрӗ, халӗхи пек пурнӑҫ ҫинчен шухӑшлама та пултарайман. Пирӗн ҫӗршывра ҫеҫ совет хӗрарӑмӗ ҫакан пек ирӗклӗ сывлать. Аслӑ Сталин, большевикла тӑван парти, Совет правителстви пачӗҫ пире ҫак пурнӑҫа.

Епӗр, ирӗклӗ тата телейлӗ ҫӗршывӑн хӗрарӑмӗсем, хамӑрӑн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыва чикӗсӗр йуратӑтпӑр. Епӗр лайӑх пӗлетпӗр, пирӗн тӑван ҫӗршыв ҫине фашиссем ӗҫҫыннисен йунӗпе йунланнӑ аллисене тӑсаҫҫӗ, вӗсем пирӗнтен пирӗн телейлӗ пурнӑҫа туртса илесшӗн. Анчах епӗр, социалисӑм ҫӗршывӗн тӳрӗ хӗрӗсем, Совет Союзӗн ӗҫҫыннисем кӗрешсе илнӗ аслӑ ҫӗршыв ҫине килсе ура пусма никама та ирӗк памастпӑр. Мана тӑван ҫӗршыв чӗнсен, епӗ пур вӑхӑтра та хамӑн трактора танкпа улӑштарса, хамӑн тӑван ҫӗршывӑн кашни утӑм ҫӗрӗшӗн йулашки йун тумламӗ пӗтиччен кӗрешме хатӗр.

Епӗ, есӗр мана шаннӑшӑн питӗ тав тӑватӑп. Хамӑн пӗтӗм вӑйа социалисӑмла тӑван ҫӗршыва, Сталин йулташ йертсе пынипе ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳсем патне пыракан аслӑ совет халӑхне паратӑп.

Сталин йулташ патне йанӑ ҫыру

Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн, ПСК(б)П Обкомӗпе хула комитечӗн тата Шупашкар хула совечӗн хулари ӗҫҫыннисемпе пӗрле, 1937 ҫулхи декабӗрӗн 4-мӗшӗнче пулнӑ чаплӑ ларӑвӗ йышӑннӑ.

Хаклӑ тата йуратнӑ СТАЛИН йулташ!

Пӗтӗм халӑхӑн хаваслӑ та ҫутӑ праҫникӗ пулса тӑракан кун, мӗн пур епохӑсенчи чи аслӑ документа—Сталинла Конституцийе йышӑнни пӗр ҫулталӑк тултарнӑ кун, пирӗн куҫсем халӑхсен ҫак аслӑран та аслӑ хартине тунӑ ҫын ҫине, Марксӑн—Енгелсӑн—Ленинӑн хӑватлӑ, никам ҫӗнтерейми йалавне алӑра ҫирӗп тытакан ҫын ҫине, ҫӗршыва коммунисӑмӑн ҫутӑ ҫӳллӗшӗсем патне шанчӑклӑн илсе пыракан ҫын ҫине — Сирӗн ҫине пӑхаҫҫӗ, пирӗн ҫулпуҫӗ, пирӗн тус тата учителӗ Сталин йулташ!

Ҫулталӑк кайала Советсен Пӗтӗм Союзри Чрезвычайлӑ VIII-мӗш Сйесӗ Советла Социалисӑмлӑ Республикӑсен Союзӗн ҫӗнӗ, тӗнчери чи демократилӗ Конституцине ҫирӗплетрӗ. Сталинла Конституци Октйабӗрти Социалисӑмла революци кӗрешсе ҫӗнтерсе илнисен аслӑ итогне турӗ, ССР Союзӗнчи халӑхсен халиччен курман историлӗ ҫӗнтерӳвӗсене йаланлӑхах ҫирӗплетсе хучӗ.

Пирӗн ҫӗршывра социалисӑм татӑклӑн ҫӗнтерчӗ. Рабочи класпа хресченсен союзӗ никам уйӑрайми ҫирӗп, ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванлӑ туслӑхӗ никам пӑсайми вӑйлӑ. Пирӗн ырӑ тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисем експлоатацирен, ҫуклӑхран тата безработицӑран ӗмӗрлӗхе хӑтӑлчӗҫ. Вӗсем творчествӑла ӗҫлеме, вӗренме, канма, културӑ тӗлӗшпе малала кайса пыма майсем илчӗҫ. Пирӗн ҫӗршывӑн пур гражданӗсем те пӗртан правалӑ. Ҫак правасене революцилӗ кӗрешӳре кӗрешсе илнӗ, вӗсене Сталинла Конституци сыхласа тӑрать.

Чӑваш халӑхӗ уншӑн сталинла пит пысӑккӑн тӑрӑшнине уйӑрмах туйса тӑрать, революци пуличченхи вӑхӑтра вӑл експлоатацин икӗ хутлӑ пусмӑрӗ айӗнче пулнӑ. Чӑваш халӑхӗ Совет ҫӗршывӗнчи ытти мӗнпур халӑхӗсемпе пӗрле социалисӑм тӑвать.

Пирӗн ырӑ тӑван ҫӗршывӑн халӑхӗсем Сталинла Конституцин сарлака йалавӗпе ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн суйлавне сывхарса пыраҫҫӗ. Ӗҫҫыннисем ҫӗршывӑн аслӑ органне депутата суйлама кандидата Совет ҫӗршывӗн чи лайӑх, чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен ывӑлӗсемпе хӗрӗсене палӑртрӗҫ. Пирӗн социалисӑмла тӑван ҫӗршыв пӗр шухӑшлӑ пулса пӗрремӗш кандидата, ССР Союзӗн Аслӑ Советне пӗрремӗш представителӗ Сире, хаклӑ Иосиф Виссарионович, палӑртрӗ.

Аслӑ Совета суйлама хатӗрленни массӑсен политикӑлӑ тата производствӑлӑ активлӑхӗн халиччен пулманлах вӑйлӑ хумне ҫӗклерӗ. Суйлав кунӗнче ҫӗршыври мӗлйуншар суйлавҫӑсем ҫӗршывӑн паттӑр патриочӗсен, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн, коммунисӑм ӗҫӗшӗн пӗтӗм чӗререн тӑракансен йачӗсене ҫырнӑ бӳллетенсене суйлав йешчӗкӗсене йараҫҫӗ.

Етемлӗх общӗствин ылханлӑ кайашӗсем, халӑхӑн ирсӗр те усал тӑшманӗсем — фашисӑма тарӑ кӗрешнӗ троцкиссемпе бухаринецсем, тата буржуалӑ националиссем социалисӑм ҫӗнтерӳлӗн малала кайассине чарса хума, ӗҫҫыннисем ҫине каллех помешчиклекапиталисла експлоатацин майкӑчне тӑхӑнтарма хӑтланаҫҫӗ. Совет халӑхӗ, Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе, фашисла бандитсене тӗпӗ-тымарӗпех ҫӗмӗрсе тӑкать тата Сталинла Конституци йалавӗпе шанчӑклӑн малала пырса етемлӗхӗн ӗмӗрхи ӗмӗчӗ патне—коммунисӑм патне ҫитет.

Сывӑ пултӑр Сталинла Конституци!

Сывӑ пултӑр пирӗн социалисӑмла тӑван ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр аслӑ Сталин!

Стецкий йулташ Шупашкарти рабочисем патӗнче

А. И. Стецкий йулташ

Декабӗрӗн 6-мӗшӗнче Шупашкарти калаҫакан кино-театрта суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи пухувӗ пулса иртрӗ. Пухува Шупашкар хулинчи фабрик-заводсенчи рабочисемпе служӑшчисем тата инженерла-техникла работниксем пухӑннӑ.

Пысӑк залра халӑх туллийех. Вӗсем пурте хӑйсем Аслӑ Совета депутата суйлама тӑратнӑ кандидатпа—Алексей Иванович Стецкипе паллашма пухӑннӑ.

Пит те кӑмӑллӑн, ӑшшӑн йышанса илчӗҫ вӗсем хӑйсен йуратнӑ кандидатне Стецкий йулташа. Вӑл залана кӗрсенех ӑна суйлавҫӑсем пурте ура ҫине тӑрса, нумайччен алӑ ҫупса, „урра" кӑшкӑрса саламларӗҫ.

Пухура Стецкий йулташа саламласа Кириллов (тир-сӑран заводӗнчен), инженер Кудрйашова („Водосвет" станцинчен), стахановка Карамзина (спирт заводӗнчен), т. ыт. йулташсем те нумай тухса калаҫрӗҫ. Вӗсем Стецкий, Чкалов, Андрейева йулташсемшӗн сасӑлама чӗнсе хӗрӳлӗ сӑмах каларӗҫ. Пухуна пынӑ суйлавҫӑсем ораторсене кашнинех тӑвӑллӑн алӑ ҫупса хапӑлаҫҫӗ, ораторсем каланипе килӗшнине, Ленин—Сталин партийӗн шанчӑклӑ ывӑл-хӗрӗсемшӗн сасӑлама хатӗррине, хӑйсен кандидачӗсене пӗтӗм чӗререн, кӑмӑлтан йуратнине кӑтартаҫҫӗ пухура Стецкий йул. сӑмах каларӗ.

— Сывӑ пулччӑр пирӗн йуратнӑ кандидатсем Стецкий, Чкалов, Андрейева йулташсем!

— Сывӑ пултӑр халӑхӑн йуратнӑ ҫулпуҫӗ—пирӗн пӗрремӗш кандидат Сталин йулташ. Ҫаксем пулчӗҫ кашнин чӗререн тухнӑ ӑшӑ сӑмахсем.

Пуху Стецкий, Чкалов, Андрейева йулташсемшӗн сасӑлама чӗнсе кӗске резолюци йышӑнчӗ. Ҫакӑнпа пуху хупӑнчӗ.

Совет хӗрарӑмӗсемшӗн сталинла тӑрӑшни

Ҫӗршывра ача амӑшӗсем валли тата ачасем валли пит нумай учрежденисем уҫнӑ. Йулашки вӑхӑтра государствӑ нумай семйеллӗ ача амӑшӗсене пособи ҫӗршер мӗлйун тенкӗ тӳленӗ. 1937 ҫулта государствӑ ача амӑшӗсене 822 мӗлйун тенкӗ,—1925 ҫулхинчен пилӗк хута йахӑн ытларах панӑ; ҫуралнӑ ачасене пӑхса тӑрантарма 1937 ҫулта 126 мӗлйун тенкӗне йахӑн, пионер лагӗрӗсем валли 1937 ҫулта 128 мӗлйун тенкӗ ытла,—пйатилеткӑ пуҫланнӑ чухнехинчен 130 хут ытларах панӑ. Вуникӗ мӗлйун йахӑн ачасем ача йаҫлисенче тата ача сачӗсенче пурӑнаҫҫӗ.

Совет государстви ССР Союзӗнчи хӗрарӑмсен ӗҫ правине ҫакӑн пек гарантилет. Ахальрен мар ӗнтӗ халӗхи вӑхӑтра хӗрарӑмсем хамӑр ҫӗршыври рабочисемпе служӑшчисен пӗтӗм массин виҫҫӗмӗш пайӗ (9 мӗлйун ҫын) пулса тӑраҫҫӗ. (ТАСС).

Суйлав кампани тӗлне Изогиз кӑларнӑ плакат. Плакат авторӗ—П. Йастржембский художник. Союзфото репродукцийӗ.

ШУПАШКАР СУЙЛАВ ОКРУГӖ

ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидатсем А. И. Стецкий тата З. А. Андрейева йулташсем хӑйсен суйлавҫисемпе тӗл пулнӑ

Ишек суйлав участкиичи суйлав умӗнхи пуху

ИШЕК, 5, (хамӑр корр.). Пайан каҫхине Сталин йачӗпе тӑракан колхоз клубӗнче ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидатсем: ПСК(б) Парти Тӗп Комитечӗн парти пропагандипе агитаци пайӗн пуҫлӑхӗ А. И. Стецкий йулташ тата Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн председателе З. А. Андрейева йулташ хӑйсен суйлавҫисемпе тӗл пулчӗҫ. Суйлавҫӑсем хӑйсен хисеплӗ хӑнисене пысӑк савӑнӑҫпа кӗтсе илчӗҫ. Пухура Алино, Чаканар, т. ыт. суйлав участкисенчи суйлавҫӑсем те пынӑ.

Ишек суйлав участкинчи суйлавҫӑсен пухуне колхоз председателӗ Смирнов йулташ кӗске сӑмах каласа уҫрӗ. Сталинла Конституцине йышӑннӑранпа пӗр ҫул тултарни ҫинчен ПСК(б) Парти Обкомӗн секретарӗ Павлов йулташ доклад туса пачӗ. Л. Филиппов (стахановец), А. Наумов (комсомолец), Федоров (ПСК(б)Партин Ишлей райкомӗн секретарӗ), Т. Степанов (ҫамрӑк суйлавҫӑ), В. Степанов (колхозник) йулташсем тухса калаҫрӗҫ. ПСК(б) Партин Шупашкар хула комитечӗн секретарӗ Смирнов йулташ Шупашкар хулинчи ӗҫҫыннисен йачӗпе Ишек участкин ӗҫҫыннисене саламларӗ. ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидатсем З. А. Андрейева тата А. И. Стецкий йулташсем тухса каларӗҫ. Стецкий тата Андрейева йулташсем суйлавҫӑсене хӑйсен биографийӗсемпе паллаштарчӗҫ.

Пуху хупӑнсан ӗ. Пурте ура ҫине тӑрса тӑвӑллӑн алӑ ҫупрӗҫ. Залран:

— Сывӑ пултӑр пирӗн ҫулпуҫ аслӑ Сталин!

— Сывӑ пултӑр Аслӑ Совета депутата суйлама палӑртнӑ пирӗн кандидат Алексей Иванович Стецкий!

— Сывӑ пулччӗр пирӗн кандидатсем Стецкий, Андрейева, Чкалов йулташсем!—тесе кашкӑрнипе тӑвӑллӑн алӑ ҫупни нумайчен йанраса тӑчӗ.

Пуху хыҫҫӑн вӗренекен ачасен хор кружокӗ концерт лартса пачӗ, вӗсем „Песня о Сталине" йурӑна чӑвашла тата вырӑсла йурласа пачӗҫ.

Сталин йачӗпе тӑракан колхоз председателӗн Смирнов йулташӑн сӑмахӗ

Йулташсем, пайан епӗр суйлавҫӑсем, Аслӑ Совета депутата суйлама палӑртнӑ хамӑрӑн йуратнӑ кандидатсемпе А. И. Стецкий тата З. А. Андрейева йулташсемпе тӗл пултӑмӑр. Ҫак тӗлпулу пирӗн асра нумайччен йулӗ. Аслӑ Совета депутата суйлама палӑртнӑ хамӑр кандидатсене мӗншӗн ҫав тери хӗрӳллӗн саватпӑр тата йуратӑтпӑр? Мӗншӗн тесен вӗсем пирӗн ҫӗршывӑн чи шанчӑклӑ ҫыннисем. Национаљнӑҫсен Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидат Алексей Иванович Стецкий йулташ парти членӗнче 22 ҫул тӑрать. (Алӑ ҫупаҫҫӗ). Парти ӑна ответлӑ ӗҫсене тума хушнӑ. Вӑл хушнӑ ӗҫе чӗререн пурнӑҫланӑ, йаланах парти шанчӑкне тивӗҫлӗ пулнӑ. Стецкий йулташ Сталин йулташӑн чи сывӑх помошникӗ.

Епӗр Стецкий, Чкалов тата Андрейева пирӗн суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшнӗшӗн савӑнатпӑр тата хавасланатпӑр. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Кунта пурте пекех кивӗ Ишек ҫинчен нумай каларӗҫ, ҫӗнӗ Ишек ҫинчен сахалтарах каларӗҫ. Совет влаҫӗ пирӗн йалӑн сӑн-сӑпатне тӗпренех улӑштарчӗ. Ишекре халӗ телефон, радио, клуб, больницӑ, почтӑ, агроучастӑк, вӑтам шкул пур. Вӑтам шкул пӗтерсе 80 ҫын аслӑ шкулсенче вӗренеҫҫӗ, вӑтам шкулта 160 ҫын вӗренеҫҫӗ. Пирӗн уйхирсенче ҫӗнӗ машинӑсем—комбайн, трактор т. ыт. те ӗҫлеҫҫӗ. Ҫав машинӑсем ҫинче пирӗн ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак професине кивӗ Ишек йалӗ ӗлӗк пӗлме те пултарайман.

Йулташсем, пирӗн ҫӗршыва пуйан та тӗреклӗ тума, Аслӑ Совета тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ҫыннисене суйламала. Епӗ Ишек участкинчи пӗтӗм суйлавҫӑсене декабӗрӗн 12-мӗшӗнче Сталин йулташӑн чи ҫывӑх помошникӗшӗн—Алексей Иванович Стецкий йулташшӑн, Чӑваш халӑхӗн шанчӑклӑ хӗрӗшӗн—Зойа Ананйевна Андрейева йулташшӑн тата Совет Союзӗн Геройӗ Валерий Павлович Чкалов йулташшӑн сасӑлама чӗнетӗп. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Тата пилĕк кунран Аслă Совета суйлатпăр

Доверенăйсем, агитаторсем! Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн—хамăр çĕршывăн мухтавлă ывăл-хĕрĕсемшĕн лайăхрах агитацилĕр!

Участкăсенчи суйлав комиççисем! Суйлав комиççи çурчĕсене тĕплĕн хатĕрлĕр, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлавçăсене 100 процентчĕпех суйлава тухмала тăвăр!

Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн сасăлатпăр

ШĂНКĂРТАМ. Нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче районри суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухувĕ пулса иртрĕ Лозунгсемпе, хĕрлĕ йалавсемпе, партипе правителствă çулпуçĕсен сăн-ÿкерчĕкĕсемпе илемлетнĕ клуб çынсемпе тулчĕ. Пухура Улатăр суйлав округĕ тăрăх Аслă Совета депутата суйлама регистрациленĕ кандидат Спасов йулташ сăмах тухса каларĕ.

— Совет Сойузĕнчи халăх чи телейлĕ, чи малта пыракан халăх. Епĕр социалисăмла пурнăçра пурăнатпăр. Пире çак телейлĕ пурнăç патне коммунисла парти тата хаклă Сталин йулташ йертсе пычĕ. Пирĕн пур ĕçре те çĕнтерÿсем пысăк. Вăл тăшмансемшĕн те паллă. Халĕ ĕнтĕ тăшмансем те: Совет влаçĕ ĕçхалăхĕн интересне сыхлаймасть, унăн хуçалăхне йĕркелĕ тытса пыма пултараймасть теме хăйаймаççĕ.

Епĕ пайан сирĕн районри „Марс" колхозра пултăм. Унти колхозниксем тулли, кулӡтурлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Чылай колхозниксем пиншер пăт тырă илеççĕ, 150 пăтран кайа илекенсем çук та. Колхозăн 150 лаша, фермăра 100 ĕне ытла. Ун пек колхозсем пирĕн кашни вырăнтах пур.

Малала Спасов йулташ суйлавçăсене промышленнăç, йалхуçалăх, кулӡтура строителствинчи тата сывлăха сыхлас ĕçри çитĕнÿсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

— Тепĕр сакăр кунтан,—тет Спасов йулташ,—Аслă Совета суйлатпăр. Ĕсĕр Сойуз Советне депутата суйлама мана кандидата тăратрăр, ман çине пысăк шанчăк хутăр. Çакăншăн епĕ сире пĕтĕм чĕререн тав тăватăп. Пирĕншĕн, коммуниссемшĕн, халăх шаннинчен хакли нимĕн те çук. Пирĕн пĕтĕм вăй-хăват, пĕтĕм ĕç халăхпа тачă çыхăнса тăрать. Хам çине пысăк шанăç хунине кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр, парти ĕçĕшĕн, халăхăн ырă пурнăçĕшĕн çине тăрса ĕçленипе ответлĕп.

Манăн пурнăç ытти чăваш çыннисенчен уйрăм мар. Епĕ коммунисла партин ывăлĕ. Мана вăл пăхса ÿстернĕ. Халăх шаннине пурнăça кĕртетĕпех. Пире парти çавăн пек ĕçлеме вĕрентет. Епĕр, руководителсем, халăхпа таччăн çыхăнса тăрса, халăх руководителĕсемпе çыхăнса ĕçлесен, пире нихăçан та çĕнтереймĕ вара.

Трибуна çине кăвак çÿçлĕ ватă колхозник Вакайев йулташ тухрĕ. Вăл „Ударник" колхозран. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çакна каларĕ:

— Тухса калаçмасăр чĕрем тÿсеймерĕ. Суйлавсем ĕлĕк те пулнă, анчах пирĕншĕн мар, пуйансемшĕн. Камсене суйланине те епĕр пĕлмен. Халĕ епĕр Аслă Совет депутатне хамăр курса хамăр суйлатпăр. Епĕ ватă—59 çулта, анчах телейлĕ пурнăçра пурăннă çемĕн пурăнас килет. Çак пурнăça пире Сталин йулташ туса пачĕ.

Епĕ суйлавра пирĕн çĕршывăн чаплă ывăл-хĕрĕсемшĕн—Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн сасăлатăп. Пурне те вĕсемшĕн сасăлама чĕнетĕп.

Пухура 20 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн сасăлама пулчĕç.

Пушкин, Майков.

Хутар суйлав участкинчи агитаци ĕçĕ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.) Хутар суйлав участкинче 843 суйлавçă. Çак суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме 15 агитатор уйăрнă. Агитаторсем пуринчен ытла комсомолецсемпе коммуниссем. Пурте вĕсем агитаторсен курсĕнчен вĕренсе тухнă.

Малтанхи вăхăтрах агитаторсем Сталинла Конституципе „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенипе" вĕрентнĕ. Халĕ вăл кружоксенчен пурне те вĕрентсе кăларнă, ватăраххисемпе заӡатине çÿреме пултарайманнисем çеç кăштах йулнă. Халĕ вĕсене те килĕсене кайса вĕрентеççĕ.

Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Аслă Совета депутата суйлама регистрациленĕ Красновпа Новиков йулташсем тата РСФСР-чен Горький суйлав округĕ тăрăх суйлама регистрациленĕ Чкалов йулташ çинчен суйлавçăсене каласа парасси те анлăн сарăлса пырать. Ку тĕлĕшпе пĕрер йалсовет пленумĕпе çамрăк суйлавçăсен конференцийĕ тата икĕ хутчен пуху туса иртернĕ. Ватă суйлавçăсемпе икĕ хутчен конференци туса суйлав йĕрки, пирĕн кампăн сасăламали çинчен каласа кăтартнă.

Агитаторсем лайăх вĕрентеççĕ. Вĕсем хамăр округра сасăлама регистрациленĕ кандидатсем çинчен кăна мар, Сталин, Ворошилов, Йежов т. ыт. йулташсен биографийĕсем çинчен, Китайпа Испани çĕршывĕнчи ӡару-тăрусем çинчен каласа параççĕ. Агитаторсем валӡи консулӡтаци организациленĕ.

Агитатор, комсомолец Сергей Вайков йулташ, уйрăмăнах суйлавçăсем хушшинче пысăк шанчăклăхпа ĕçлет. Ăна пурте йуратаççĕ. Хăй участкине кĕрекен суйлавçăсене (140 çын) пурне те кружок урлă вĕрентсе кăларнă. Вăл ватă карчăксемпе, старниксемпе хăйсем патне кайса вĕрентет. Унăн заӡатийĕ хаваслă иртет. Мĕншĕн тесен ыйтусене тĕплĕн ăнланмалла ответлет. Ваттисенчен ĕлĕкхи суйлав йĕрки çинчен, пурнăç условийĕсем мĕнле пулни çинчен ыйтса пĕлет. Ун хыççăн вăл хаӡхи телейлĕ, савăнăçлă пурнăç çинчен каласа парать. Йалтан ниçта тухса çÿремен çын, 79 çулхи Архип Марков йул. декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Аслă Совета суйламали çинчен пĕлсен, çапла каларĕ:

—Çак телейлĕ, пуйан пурнăçа туса паракансемшĕн сасăлатăп епĕ. Пирĕн округри кандидатсем: Чкалов, Новиков, Краснов йулташсем Аслă Совет депутачĕ пулма тивĕçлĕ. Çавсемшĕн хамăн сасса паратăп.

Ĕлĕк ниçта тухса курман ватă çынсем хăйсене панă правасемшĕн савăнаççĕ. Çав правасене туса панăшăн аслă Сталин йулташа тав тăваççĕ.

Çамрăксем те суйлав кунне хатĕрленеççĕ. Ку таринчен 5 номĕр стена хаçачĕ кăларнă. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлавçăсене кăтартма концерт хатĕрлеççĕ.

Сахйанова йулташ Сĕнтĕрвăрри районĕнче

Нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче Шупашкар йал суйлав округĕ тăрăх Национаӡнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат—парти Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ КонтроӡКомиççин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Сахйанова йулташ Сĕнтĕрвăррине килчĕ. Çав кунах вăл Амачкина, Нерйадова йалĕсенче тата спирт заводĕнче пулчĕ.

Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче Урхас Кушкăра, Шуршăл йалсовечĕсенче; декабĕрĕн 2-мĕшĕнче Кив Тутайкасси, Кутемер йалсовечĕсенче суйлавçăсемпе тĕл пулса калаçрĕ.

Сахйанова йулташа пур çĕрте те ăшшăн, кăмăллăн кĕтсе илчĕç.

Пысăк çĕклену

Сĕнтĕрвăрри хулинчи предприйатисенче стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕ кунран-кун пысăккăн сарăлса пырать. Судоверфри рабочисем вунăкунлăха хутшăннă хыççăн çав тери пысăк пахалăхсемпе ĕçлеме тытăнчĕç. Слепнов, Тимофейев, Виноградов йулташсем куллевхи нормăна 200 процент таран тултарса пыраççĕ.

Плешников йулташ 3 кун ĕнтĕ хăйĕн нормине 200-шер процент тултарса пырать. Стахановла йухăма вăйлатса пынипе судоверф хăйĕн планне ытлашшипех тултарчĕ.

Деткомиççин катка-пичке тăвакан заводĕнчи Копылов, Алексейев йулташсем нормăна 230 процент тултараççĕ. Вĕсем нойабĕр уйăх планне 220 процент таран тултарса 1000 тенкĕ ытла ĕçукçи илнĕ. Çăвнашкалах Романов йулташ нормăна 227 процент тултарса 1.008 тенкĕ илнĕ. Сундырцовпа Зимин тата Сосин, Исайев, Йурков йулташсем нормăна 190 процентшер тултараççĕ.

Çĕнĕ Салари катка-пичке завочĕ суйлав кунне хатĕрленĕ май социалисăмла ăмăртăва вăйлатсах пырса декабĕрĕн 1 мĕшне хăйĕн планне тултарчĕ. Заводри ударник Бибиков йулташ нормăна 200 процент тултарать. Колесов, Саломонов, Глухов йулташсем 160—175 процентшер тултарса пыма тытăнчĕç.

„Çĕвĕç" аласта ертелĕ çулталăк планне нойабĕрĕн 7-мĕшĕнчех тултарнă. Ертелти çĕвĕç Фролов халĕ нормăна 263 процент тултарса пырать. Шипунов 272 процент парать.

Тимрĕççен ертелĕнче те социалисăмла ăмăрту пысăк хăвăртлăхсемпе сарăлса пырать. Ăмăртăва хутшăннă Алексейев нормăна 194 процент, Кривошейев 185 процент тултарса пыраççĕ. Кунашкал тĕслĕхсем кăтартакансем тата та нумай.

Ĕçлес кăмăлăм хăпарать

(Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйес делегачĕ)

ÇĔМĔРЛЕ (телефон тăрăх). Социалисăмла Аслă револӡуци хĕрарăмсене тĕпел кукринчен кăларса, арçынсемпе пĕртанах права пачĕ. Епĕр уншăн савăнатпăр. Илсе пахăр-ха ĕлĕкхи пурнăçа: кам пулнă пулăттăм ĕлĕк епĕ? Пĕтĕм пурнăçра ниçта тухса çÿреймесĕр, асаплана пурăннă пулăттăм. Хаӡ кам епĕ? 1933 çулччен ниçта тухса курманскер, епĕ Çĕмĕрле комбинатне ĕçе килсе кĕтем. Техминимум кружокне, хут пĕлменнисен вĕренмели шкула çÿресе пĕлĕве ÿстертĕм. Халĕ акă епĕ клӡанцировкă отделенинче пукансем сăрлана çĕрте ĕçлетĕп. Ытти станоксемпе ĕçлеме те вĕренсе çитрĕм. Ĕçленĕ вăхăтрах аслă шкула вĕренме хатĕрлекен шкулта вĕренетĕп. Çулталăк çурăран вĕренсе тухатăп. Пурнăç пачах улшăнчĕ манăн. Малтанах ĕçе кĕрсе 70—80 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Халĕ акă уйăхне 250—300 тенкĕ илетĕп.

Çак телейлĕ пурнăça курса татах та ĕçлес кăмăлăм хăпарать, вĕçĕмсĕр ĕçлес килет.

Иртнĕ çулта епĕ Советсен VIII-мĕш Чрезвычайлă Сйесĕнче делегат пултăм. Епĕ ытти делегатсемпе пĕрлех Сталинла Конституцине çирĕплетнĕ çĕрте пултăм. Ку сйесра епĕ хамăра телейлĕ пурнăç туса паракансене, партипе правителствă çулпуçĕсене: Сталин, Каганович, Молотов, Калинин йулташсене хамăн куçпа куртăм. Вĕсене курни мана çав тери хавасланатарчĕ.

Халĕ совет халăхĕ çак Сталинла Конституци тăрăх Совет Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленет. Пирĕн Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх çĕршывăн чаплă ывăлĕсене—Чкалов, Новиков тата Краснов йулташсене суйлама палăртнă. Вĕсене епĕр лайăх пĕлетпĕр. Вĕсем ĕçхалăхĕн пурнăçне татах та лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçлекен çынсем. Хамăн сасса епĕ вĕсене паратăп.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи стахановкă—Чернова.

Конституцине мĕн пуррине çырнă

Канаш районĕнчи Сиккасси хресченĕсем колхоза кĕвĕренпе хăйсен пурнăçне пур йенчен те лайăхлатрĕç. Ударлă тăрăшса ĕçленипе колхоз çĕрĕсен тырпул парас пултарулăхĕ çулсерен ÿсе пырать. Колхозниксем халĕ ĕлĕкхи пек теçетинран 40—50 пăт мар, 100—150 пăт тырă туса илеççĕ.

Ĕлĕкхи патша саманинче нумай хресченсем хура пÿртсенче пурăннă. Совет влаçĕ пуçланнăранпа çак çирĕм çул хушшинче йалта çĕнĕрен 327 пÿрт лартнă; халĕ ĕвте колхозниксем таса та çутă çуртсенче пурăнаççĕ.

Сталинла Конституцинче кăтартнă вĕренÿ прави анлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Йалта вăтам шкул пур, унта пĕтĕмпе 450 ача вĕренет. Çитĕннĕ колхозниксем хĕллехи вăхăтра агротехникă кружокĕнче вĕренеççĕ. Хут пĕлменнисене суйлав кунĕ тĕлне вĕрентсе çитерĕççĕ.

Хаçат-журнал çырăнса илекенсен йышĕ ÿсех пырать. 15 колхозник килне радио кĕртнĕ.

Кану прави çинчен ĕлĕк ĕçхресченĕсем ĕмĕтленме те пултарайман. Халĕ колхозниксем, çĕршыври ытти ĕççыннисем пекех, курортсемпе те уçă кураççĕ. Антон Йакимов ĕлĕкхи вăхăтра хура пÿртре пурăннă, йалти кулаксем патĕнче тарçăра ĕçлесе çÿренĕ Унăн нихçан та нимĕн те пулман, çăкăр çитереймен вăл, выӡăх чĕрлĕх усрайман. Колхозра çичĕ çул хушши ударлă ĕçлесе, вăл хăйĕн пурнăçне тĕпренех лайăхлатрĕ Колхоз ăна кашни çул преми парса пычĕ, 1935 çулта Антон Йакимов курорта та кайса килчĕ. Халĕ вăл 3 ĕне, 8 сурăх, 7 сысна усрать. Колхозра ĕçлесе вăл хăй пĕччен 405 ĕçкунĕ тунă, семйипе унăн 700 ĕçкунĕ пулать, вĕсем кăçал ĕç кунĕпе 350 пăт тĕштырă илеççĕ.

Конституцине мĕн пуррине, мĕн çĕнтерсе илнине çырнă. Пирĕн çĕршывра социалисăм—тĕп саккун пулса тăчĕ.

А. Гордейев.

Сталинла Конституци йачĕпе выставкă уçăлчĕ

Декабĕрĕн 3-мĕшĕнче, Чăвашсен академи театрĕнче, Сталинла Конституцине йышăнни пĕр çулталăк тултарнă йачĕпе выставкă уçăлчĕ.

Выставкă питĕ пуйан. Конституцин историне тата Сталинла Конституцине йышăннă хыççăн пĕр çулталăк хушшинче тунă çитĕнÿсене кăтартакан плакатсем, лозунгсем, диаграммăсем, схемăсем çуталса тăраççĕ.

Выставкă Париж Коммунĕ документсенчен пуçланать. Унтан Февралӡти, Октабĕрти револӡуцисен çĕнтерĕвĕсене кăтартнă. 1918, 1922, 1924 çулсенчи конституцисем çинчен калакан пайа организациленĕ. 1924—1936-мĕш çулсенчи çитĕнÿсем. Сталинла Конституци. Сталинла Конституцин уйрăм статйисене, Сталин йулташ докладĕнчи сăмахсене илсе кăтартнă. Акă, 12-мĕш статйа йачĕпе пĕр пай тунă: „Кам ĕçлемест, çав çимест". „Кашнинчен унăн пултарулăхне кура, кашнине—унăн ĕçне кура". Кунта производствăри çитĕнÿсене лайăх кăтартнă. Стахановла йухăм. Çĕршывăн йатлă çыннисем.

Выставкăра Чăваш халăхĕн ĕлĕкхипе хаӡхи пурнăçне лайăх кăтартнă.

Выставкăна курма пыракансене ăнлантарса паракан пур. Кунтах справочнăй бÿро ĕçлет.

В. Андрейева.

Вăрнар суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу.

Ÿкерчĕк çинче: канашлу президиумĕнче (сылтăмран сулахайала) Вăрнар округ суйлав комиççи председателĕ Серебренников йулташ, унпа йунашар Националӡнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат—„Крестьянская газета" колхоз председателĕ Андрей Михайлович Краснов.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Учителсем суйлав участкисенче

ВĂРНАР (хамăр корр.). Учителсем вырăнти суйлав участкисен ĕçне пысăк активлăхпа хутшăнаççĕ. Районра 283 учител. Вĕсенчен суйлав участки председателĕсем 12, председателĕн заместителĕсем 10, секретарĕсем 26, членĕсем 19. Учителсенчен 115 çын агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем суйлавçăсене Сталинла Конституципе „Аслă Совета суйламали Положени" çинчен вĕрентеççĕ.

Уравăшри туллимар вăтам шкулти Йаковлевпа Кулайев, Упнерти—Почейкина, Хапăсри—Тимофейевпа Гермогенов, Кив Йахакассинчи—Кузьмин, Хурăнсурти—Григорйева, Йангорчинăри—Йефимовпа Шлӡупкин учителсем хăйсен участкинчи суйлавçăсемпе куллен калаçусем, пухусем, вечерсем туса иртереççĕ.

Хаӡхи вăхăтра вĕсем суйлавçăсене округ суйлав комиççийĕсем Аслă Совета кандидата регистрациленĕ В. П. Чкалов, П. И. Пумпур, А. М. Краснов йулташсен биографисене, вĕсен паттăр кĕрешÿлĕ кунçулĕсемпе ĕçĕсене тĕплĕн çутатса парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Нурăсри туллимар вăтам шкулти Гурйанов учителпе Василйев пионер вожатăйĕ кашни 15-шер çынна хутла вĕрентеççĕ. Çав вăхăтрах агитаци ĕçне те туса пыраççĕ. Кунĕр пуçне, вĕсем халăха кандидатсем çинчен каласа пама çывăхри йалсене: Мачамаша, Çĕнйала кайса суйлавçăсен пухувĕсене иртереççĕ.

Районри чылай учителĕсем çакăн пек хĕрсе ĕçленĕ вăхăтрах, Мамалайри Степанов учител халăх хушшине нихăçан та тухса курманаст.

Кăкшăмри Леонтйевпа Куликов учителсем те çавнашкалах. Вĕсене иккĕшне те уйрăм кружоксенче ĕçлеме çирĕплетнĕ. Анчах вĕсем хăйсен ĕçĕпе нимĕн те туман.

Суйлав кунĕсем çывхарса çитрĕç. Халĕ пĕтĕм вăй-хала нихăçан пулман хастарлăхпа ĕçлемеле.

Ст. Филиппов.

Суйлав саккунне пăснă

Суйлавçăсен спискисене тăвас çĕрте Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сĕнтĕрвăрри хула совечĕпе йалсоветсен хăшпĕр руководителĕсем суйлав саккунĕн уйрăм статйисене пăснă.

Сĕнтĕрвăрри хула совечĕ суйлавçăсен спискине тĕрĕс тăвассишĕн тимлĕн ĕçлемен. Вĕсем вăрман техникумĕнче вĕренекен студентсен общежитине пырса тĕрĕслеменнипе 30 суйлавçăна, хулара пурăнакан 23 суйлавçăна спискăна кÿртмесĕр хăварнă. Кунпа пĕрлех хула совечĕ чылай суйлавçăсен йачĕсене пăсса çырнă. Верхне-пролетарский урамĕнче пурăнакан Попов Владимир Йегорович хушаматне Йемелйанович, Денисовкăра пурăнакан Йеврали Павловна йатне — Фаина, тесе пăсса çырнă. Ийулӡски урамĕнче пурăнакан П. И. Кожанова 1912 çулта çуралнă пулсан, ăна 1910 çулта çуралнă, тесе çырса çапнă.

Хуракасси йалсовечĕ йалтан хулана пурăнма куçнă тата таврари йалсене качча тухнă хĕрсене вăл йалтах пурăнать, тесе суйлавçăсен спискине кÿртнĕ. Малинина Александра Хуракассинчен Тупай Ĕсмĕл йалне качча тухни чылай вăхăт иртнĕ, вăл çаплах Хуракассинчи суйлавçăсен спискинче тăрать. Ăнах Тупай Ĕсмĕл йалĕнчи суйлавçăсен спискине те кÿртнĕ. Çакăн пирки Малинина Хуракасси йалсоветне пырса йăнăша тÿрлетме ыйтнă. Анчах йалсовет председателĕ Йегоров йулташ хăйĕн йăнăшне халĕ те йусаман.

Кукашне йалсоветĕнче Заготскотра ĕçлекен çынсене пурĕ 9 çын суйлавçăсен спискине кÿртмен. Шупашкар Ĕсмĕл йалсовечĕ те суйлавçăсен спискине тĕплĕн туман, Йăрухин Васили арăмне 2 спискă çине кÿртнĕ. Меӡникова Клавди хушаматне — Феодорова тесе çырнă. Медведева учителница 1908 çулта çуралнă, ăна кунта 1808 çулта çуралнă тесе çырса çапнă.

Чермĕшре суйлав пулмали çурта хатĕрлеме тытăнман. Суйлав вулав çуртĕнче иртерме палăртнă. Анчах унта арпа тултарса лартнă. Кантăкĕсене ватса пĕтернĕ. Радиоприйомнике ватса пăрахнă.

Çавăн пекех Кушниково, Аслă Коршка, Магаç суйлав участкисен çурчĕсене йĕркелеме тытăнман.

Çичĕ пÿрт, Шĕнерпуç, Каранйал, Шупашкар Ĕсмĕл йалĕсенче вулав çурчĕсем кулӡтурăлă-массăлă ĕççене кирлĕ пек туса пымаççĕ. Ку вулав çурчĕсенче çĕнĕ Конституципе суйлав саккунĕ тата ытти кирлĕ литературă çителĕксĕр. Шупашкар Ĕсмĕл йалсоветĕнчи вулав çурт пуçлăхĕ Марков вулав çуртĕнче йаланах пулмасть.

Аслă Ăстакасси йалсоветĕнче хĕрарăмсем хушшинче суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарса паман. Вăрман Кăршка йалĕнче те йединоличниксем хушшинче суйлав саккунне ăнлантарассипе ĕçлемеççĕ. Стена хаçат редакторĕ И. Семенов суйлав участкинче çак таранччен те стена хаçачĕ кăларман. Упакасси йалĕнчи вулав çурчĕ те кирлĕ пек ĕçлемест. Вулав çурт пуçлăхĕ Р. Борисов вулав çуртне хăшпĕр чухне 2—3 кунран тин уçать.

Амачкино йалсоветĕнче хут пĕлменнисем—42 çын, Кудемер йалсоветĕнче—38 çын, Сĕнтĕрпуç йалсоветĕнче 54 çын шутланаççĕ. Хут пĕлмен çынсем кашнийех хут пĕлекен пуласшăн тăрăшаççĕ, анчах çапах та ку йалсенче хут пĕлменнисен шкулĕсене ĕçлеттерме пуçламан.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче суйлава хатĕрленес ĕçре татах пысăк йăнăшсемпе çитменлĕхсем пур.

Василйев.

Пленум решенисене пурнăçламаççĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн Пленумĕ ПСК(б) Парти райкомĕсене тата райĕçтăвкомсене суйлав кунĕччен йулнă вăхăтра хут пĕлменнисене вĕрентмели пунктсем организацилеме, хут пĕлменнисене пурне те вĕренÿве хутшăнтарма тата кашни гражданина, чи сахалтан та, суйлав бÿллетенне хăй вуласа тухма пултармалăх вĕрентме хушнă.

Çак постановленине Вăрнар райовĕнче пурнăça кĕртмеççĕ. Суйлав кунĕсем çывхарса çитрĕç. Çапах та 1344 хут пĕлменнисенчен 464 çын кăна вĕренеççĕ.

Пăртас йалсоветĕнче хута вуçех пĕлменнисем 120 çын. Вĕсене вĕренме тулли мар вăтам шкул учителĕсене хушнă, вĕсем ĕçе тытăнман. Мамалай йалсоветĕнчи хут пĕлменнисене вĕрентме райçутĕçпайĕ Александров йулташа йанă. Йалсовет председателĕ Бурмистров Александров йулташа йатласа кăларса йанă. Бурмистров хут пĕлменлĕхе пĕтерессине хирĕç пырать. Йĕршепуç йалсоветĕнче хут пĕлменнисен йышĕ 200 çынтан та иртет. Вĕсене Триликов йул. вĕрентме хушнă. Йалсовечĕпе колхоз правленийĕ тăрăшманнипе Триликов халĕ те вĕрентме тытăнман.

Райçутĕçпайĕ хут пĕлменлĕхе пĕтерессипе нимĕн те ĕçлемест. Пайанхи куна çитсе те йалсоветсенчи хут пĕлменнисене вĕрентме уйăрнă çынсене пухса ПСК(б) Парти Обкомĕ йышăннă постановленине сÿтсе йавман. Райçутĕçпайĕнче ĕçлекенсем йалсенче пулсан та ĕçе тĕплĕн тумаççĕ.

Н. Козлов.

Сталинла Конституци кунне уйăвлани

Шупашкар хулинчи митинкра А. И. Стецкий йулташ сăмах тухса саларĕ

Пайан чан-чан хĕл кунĕ. Çĕрле çунă çĕнĕ йур ура айĕнче кăтăртатать. Пĕлĕтлĕ, ăшă çанталăк. Уçă сывлăш пĕтĕм кăкăра уçса йарать.

Хула ирех вăранчĕ. Республикăн столици кашни урамĕ, кашни посолăкĕ праçник тумĕпе тумланнă. Пур çĕрте те хĕрлĕ хăмач йалавсем. Пур çĕрте те плакатсемпе лозунгсем: "Декабĕрĕн 12-мĕш—ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кун", "Хамăрăн тивĕçлĕ кандидатсемшĕн—Стецкий, Чкалов, Андрейева йулташсемшĕн сасăлар", „Сывă пултăр Сталинла Конституци!"

Хĕрлĕ плошчĕ. Трибунăн икĕ йенĕпе ЛЕНИН тата СТАЛИН портречĕсем. Хуме тăрăх партипе правительствăн çулпуçĕсен, Совет Союз маршалĕсен, Совет Союзĕ Геройĕсен, хамăр республикăри чаплă йатлă çынсен портречĕсене, лозунгсене, плакатсене вырнаçтарса тухнă.

* * *

Кăнтăрла 11 сехетре Хĕрлĕ плошчĕ ĕççыннисемпе тулса ларать. Йалавсемпе, хавасла йурăсемпе, халăхсен йуратнă çулпуçне, аслăран та аслă генийĕ, телейлĕ совет халăхне çĕнĕ Конституцине туса паракана—Иосиф Виссарионович Сталина вĕçĕмсĕр йуратса чĕре тулли кăмăлпа ăшшăн саламласа кан лозунгсемпе, пырасçĕ нумай çынлă колоннăсем. Плошчĕ кĕрлет. Музыкă савăнăçлă çĕмĕ выляать. Çамрăксем ал çупса „лезгинка" ташласçĕ.

Акă трибуна çине парти Обкомĕпе Чăваш правительствин руководителĕсем тата ПСК(б)П Тĕп комĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ—Шупашкар суйлав округĕнчен Националăн Советне депутата суйламалăх тăратнă кандидат А. И. Стецкий йулташ хăпараççĕ.

ПСК(б)П хула комитет секретарĕ Смирнов йулташ кĕске сăмах каласа, Сталинла Конституцине çирĕплетнĕренпе çулталăк çитнĕ йачĕпе пухăнна митинга уçать.

— Пайан пĕтĕм халăх праçникĕ,—тет вăл—Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйесĕ Сталинла Конституцине çирĕплетни çулталăк тултарчĕ. Пайанхи кун епĕр халăхсен йуратнă çулпуçне, çĕнĕ Конституцине тăвакана—Сталин йулташа саламлатпăр. Епĕр Сталин йулташăн сывăх ученикне, Аслă Совета депутата суйламали хамăрăн тивĕçлĕ кандидата — Алексей Иванович Стецкий йулташа саламлатпăр. (Хавасланса алă çупасçĕ, „урра" кăшкăрасçĕ. Оркестр „Интернационал" вылять).

— Епĕр пайан парти Тĕпкомне, совет правительствине, Сталин йулташăн соратникĕсен патне—Молотов, Ворошилов, Каганович, Калинин, Андрейев, Микойан, Чубарь, Йежов, Жданов йулташсем патне саламсем йаратăр. Епĕр, ĕççыннисем, хамăрăн тăван çĕршыва тата тĕреклĕрех тума хатĕрленетпĕр, Аслă Совет суйлавне большевикла ирттеретпĕр. Хамăрăн тивĕçлĕ кандидатсемшĕн—Стецкий, Андрейева, Чкалов йулташсемшĕн сасăлатпăр.

— Сывă пултăр пирĕн йуратнă çулпуç аслă Сталин!

Сталин йатне асăнсан плошчĕд каллех тăвăллăн ал çупнипе, хаваклăн „урра" кăшкăрнипе кĕрлесе кайать. Музыка „Интернационал" выљать.

Уйтан ПСК(б)П Обком секретарĕ Дубов йулташ сăмах тухса калать. Вăл аслă совет халăхĕн телейлĕ пурнăçĕ çинчен, çав телейлĕ те савăнăçлă çутă пурнăçа коммунистсен партийĕ, Сталин йулташ туса пани çинчен каласан митинга пухăннă халăх çулпуçне саламласа „урра" кăшкăрать, хаваслана алă çупать. Малала оратор пирĕн тăван çĕршыва социализм таткăлăнах çĕнтерни çинчен, социализмăн историлĕ аслă çĕнтерÿвĕсене Сталинла Конституци çине саккунласа çирĕплетсе çырса хуни çинчен, совет гражданĕсен никам пасайми аслă прависене Конституци çине ылттăн саспалисемпе çырни çинчен калать, çирĕм çул хушшинчи кĕрешÿре паттăр çулсене аса илтерет.

Сталинла Конституци кунне епĕр Аслă Совета суйлас умĕн уйавлатпăр. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче хамăрăн сасăмăрсене Сталин йулташăн чи лайăх ученикне—Стецкий йулташа парар! (Ал çупасçĕ, „Сывă пултăр пирĕн тивĕçлĕ депутат Стецкий йулташ, урра!" тесе кăшкăрасçĕ).

— Стецкий йулташ аслă Сталинăн чи лайăх ученикĕ пулса тăрать, вăл Ленин—Сталин ĕçĕшĕн шанчăклăн кĕрешет,—тет оратор. Митинга пухăнна халăх каллех хавасланса алă çупать, „урра" кăшкăрать.

— Маркс—Енгельс—Ленин йалавĕпе епĕр Октябрĕшĕн кĕрешсе çĕнтертĕмĕр, вăл йалавпах епĕр пĕтĕм тĕнчипе пулас революцире çĕнтерĕпĕр. Сталин йулташ йертсе пынипе коммунизмăн çĕнĕ çĕнтерÿвĕсем патне, малалла!

Хĕрлĕ плошчĕ „урра" кăшкăрнипе, алă çупнипе, „Интернационал" кĕввипе йанăрать.

А. И. Стецкий йулташ сăмах илни çинчен пĕлтерсен, парти тата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕ-хĕррисĕр йуратса саламлă лозунгсем кăшкăрасçĕ.

Стецкий йулташ ирĕке тухнă совет халăхĕн аслă хартийĕ—пирĕн ĕмĕрти чаплă документ—Сталинла Конституци çинчен калать. Иртнĕ çирĕм çул хушшинче—çак историлĕ кĕске срукрах, пирĕн Совет Союзĕ малта пыракан индустрилĕ державă, никам касса чиксе витереймĕ „брон"ăпа хÿтĕленнĕ хăватлă çĕршыв пулса тăчĕ. Вĕр çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланна пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ çара тĕнчере нимĕнле вăй та çĕнтерме пултараймасть. Фашиссем пирĕн йуратнă тăван çĕршыв çине тапăнма хăйу çитерсен, пирĕн Хĕрлĕ çар тăшман питкуçĕ умĕнче аçа-çиçĕмĕн йăлтăрататĕ те, йăна вĕлермелипех вĕлерсе хурĕ.

— Йулташсем, — тет малала Стецкий йулташ, — ССР Союзĕн Аслă Совечĕн Националăнăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар суйлав округĕнчен манăн кандидатурăна тăратнă. („Урра" кăшкăрасçĕ). Ман çине çавăн пек пысăк шанăç хунăшăн сире пĕтĕм чĕререн тавтаватăп тата Ленин—Сталин ĕçĕшĕн малашне те çирĕп кĕрешме сăмах паратăп („Урра" кăшкăрасçĕ). Ман çине шанни вăл есĕр пирĕн коммунистла партие шанни пулать. (Ал çупасçĕ, „урра" кăшкăрасçĕ). „Сывă пултăр йуратнă çулпуç аслă Сталин", „Сывă пултăр Сталин йулташăн ученикĕ Стецкий йулташ!" тесе саламласа кăшкăрасçĕ). Епĕ ĕнтĕ парти ĕçĕшĕн çирĕм икĕ çул хушши кĕрешетĕп. Ленин — Сталин йалавне малала та тĕрĕссĕн те çÿлте тытса пыма тупа тăватăп.

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пулчăр аслă праçнике уйавлакан Совет Союзĕн халăхсем!

Çак сăмахсем хыççăн митинг нихçан та чарăнма пултарас çук пек кĕрлесе кайать. Совет Союзне пĕр çĕнтерÿ патĕнчен тепĕр çĕнтерÿ патне илсе пыракан аслă Сталинпа унăн соратникĕсене, Сталин йулташăн тĕрĕс ученикне—хамăрăн тивĕçлĕ кандидата А. И. Стецкий йулташа саламласа кăшкăрна лозунгсем Хĕрлĕ плошчĕре нумайчен йанăраса тăрасçĕ.

Митинг хупăнать. Колоннăсем хаваслă маршсемпе, çĕнтерÿ йурăсемпе килеле саланасçĕ.

С. К.

Суйлав кунĕнче йаçлĕ ĕçлет

ТУТАРКАС. Çатракассинчи хĕрарăмсем Аслă Совета суйламали саккуна лайăх вĕренчĕç. Суйлав кунĕнче — декабĕрĕн 12-мĕшĕнче хĕрарăмсене нимĕнле чăрмав та ан пултăр тесе, ача йаçли организацилеççĕ. Йаçлĕ валљи çимĕçсем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Тĕрлĕ выљамали теттесем туйанчĕ.

К. Пушкин.

ЁМĔТ ÇИТРĔ

Епĕ Çĕнйал йалĕнче (Трак р.) çуралнă. Нумай вăхăт хушши ăста килчĕ унта тата кулаксем патĕнче ĕçлесе çÿренĕ. Темĕн чухлĕ ĕçлесен те ыра йат илтмен, тăранмалăх çăкăр çисе курман. Манăн аттепе анне тăкçанах вилнĕ, вĕсенчен çамрăклах тăлăха йултăм, хурăнташсем пулман.

Астăватăп. 1931 çул. Пирвайхи хут Шупашкар хулине килтĕм. Урамсем тăрăх нумай кун хушши çÿрерĕм, ĕç шырарăм. Ĕç тупăнчĕ, Чăваш пединститутне техничкă пулса ĕçлеме кĕтĕм. Пăхаттăм та пăшăрханаттăм, манашкал çынсемех аслă шкулта вĕренеççĕ. Вĕренес шухăш чĕрене канăç памасчĕ, анчах епĕ хут вĕренмен. Йулташсем пулăшнипе çав çулах хут сахал пĕлекенсен шкулне вĕренме кĕтĕм, вĕренсе тухрăм. Çул уçăлчĕ. Политикăлă ĕçсене хутшăнма пуçларăм. 1932 çулта ПСÇЛКС членне кĕтĕм. Комсомол мана пулăшрĕ, вĕрентрĕ. Пĕлÿ ÿссе пычĕ.

Акă хаљ, ĕçрен уйăрăлмасăр, Çутĕç халăх комиссариачĕ çумĕнчи вăтам шкула заочнă вĕренме кĕтĕм. Тăрăшса вĕренетĕп, вăтам пĕлÿ илетĕпех. Епĕ техничкă, мана пурте хисеплеççĕ, халĕ тата ударницăсен ретне кĕртрĕç, вăртăн сасăласа профсойуз Обком членне суйларĕç. Епĕ хаљ пÿртрен тухмасăр, кăмака умĕнче тăракан кухаркă мар. Епĕ пĕртан правалă, социализм çĕнтерсе илнĕ çĕршыван хисеплĕ çынĕ. Епĕ государства ĕçĕнче хутшăнса ĕçлетĕп. Манăн пĕтĕм ĕççыннисемпе танах Аслă Совета суйлама тата суйланма права пур.

Патша саманинче ман пек техничкăра ĕçлекенсене государствă ĕçне хутшăнтарма мар, çын вырăнне те хуман. Никам та чĕрери кăмăлпа калаçман, йуратман, кулаксем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттерсе чуна илнĕ, ним сăлтавсăр тискеррĕн хĕненĕ, выçă усранă. Кулаксем санăн йатна çухатса „йытă" тесе чĕннĕ, йытăран кайа хисепе хунă. Хĕрача пулсан, сана кулак ачисем намăсланă.

Октабĕрти Социалисăмла Аслă революци çакнашкал пусмăрлă чуралăхне ĕмĕрлĕхе пĕтерчĕ. Çынна хăйĕн тивĕçне кĕртрĕ. Етемлĕхе ылттăн саспаллисемпе çырнă Сталинла Конституципе парнелерĕ. Халĕ хут те мĕнле ĕçре ĕçле, вăл ĕç чыслă, вăл ĕç хусепре, çав ĕçе тăвакана йуратаççĕ, мухтаççĕ, вĕрентеççĕ. Ывăнсан йе чирлесен государства хăйĕн укçипе санаторине, курорта, канмали çурта йарать. Ватăлсан йе ăнсăртран ĕç пултарулăхне çухатсан государствă пенси парать. Çак правасене Сталинла Конституци пачĕ. Пайан пурăнма аван, ыран татах та лайăхрах, татах та пуйантарах, татах та савăнăçлăрах, татах та телейлĕрех пулать.

Кам пачĕ çакăн пек телейлĕ пурнăçа? Пире вĕсене Ленин—Сталин партийĕ, совет влаçĕ пачĕ. Çавăнпа та епĕ Ленин—Сталин партишĕн, халăхсен çулпуçĕ Сталин аттешĕн сасăлатăп. Çавăнпа та епĕ Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, халăхсен телейлĕхĕшĕн, рабочисемпе хресченсен государстви тереклĕхĕшĕн, унăн хăвачĕпе мухтавлăхĕшĕн пĕтĕм вăйхăватпа ĕçлекен, халăх тăшманĕсене хирĕç большевикла кĕрешекен, халăхсен чи шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн—А. И. Стецкий, В. П. Чкалов тата З. А. Андрейева йулташсемшĕн сасăлатăп. Сывă пултăр Сталин! Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Серафима Арсентйева.
Пединститутри швейцаркă.

Уйри ĕççен паха итогĕсем

ÇĔМĔРЛĔ, („Чăваш Коммунĕ" корр.). Нойаберĕн 23-мĕшĕнче районти йалхуçалăх выставки уçăлчĕ.

Кăçалхи выставкă ытти çулхи выставкăсенчен уйрăманах малта тăрать.

Пысăк Улхашри „Красноармеец" колхоз выставкăна йетĕн, купăста т. ыт. пахча-çимĕççене тăратнă. Кăçал колхоз 80 гектар йетĕн акнă. Орденоноскă Анисийа Чекменева йулташ маçтăрлăхĕпе çак 80 гектар çинчен 400 центнер ытла сÿс туса илнĕ. Вăтаман шутласан „Красноармеец" колхоз кăçалхи çул гектартан йетĕн вăррине—6,5 центнер, тыламан сÿсне—20 центнер, таса сÿсне—5 центнер илнĕ. Хашпĕр звеносем гектартан 7 центнер сÿс туса илнĕ.

„Красноармеец" колхозра кăçалхи çул купăста аван пулнă. 3 гектар çинчен 90 тоннă купăста туса илнĕ. Пĕр купăста пуçĕ 11,5 килограм туртать.

Йуманайри „Канаш", Хутарти Ленин йачĕпе тăракан колхозсем те кăçал пахча çимĕç тăвас тĕлĕшпе аван тĕслĕхсем кăтартрĕç. Хутар колхоз гектартан 33,5 центнер купăста туса илнĕ. „Канаш" колхозăн кишĕр гектартан 400 центнер пулнă. Уйрăм кишĕрсем 1,5 килограм тайаççе.

„14 лет Октября" колхоз гектартан (вăтам шутпа) ыраш 20 центнер, кĕрхи тула—25 центнер, çурхи тула—23,93 центнер тата сĕлĕ—23,77 центнер туса илни ытти çулхипе танлаштарсан çав тери пысăк çитĕнÿ тунине пĕлтерет. „Канаш" колхозăн та тыра вăйлă пулнă. Унăн гектартан: ыраш 24 центнер, кĕрхи тула—21,8 центнер, сĕлĕ—20 центнер пулнă, уйрăм гектарсенчен тула—24 центнер илни те пур.

Выставкăра выљăх-чĕрлĕх, чăхчĕп ĕçне, вĕсен тухăçлăхне кăтартакан тĕслĕхсене те курма пулать. „Красный Октябрь" колхоз иртнĕ çулта вăтамран пĕр ĕне пуçне 1.982 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал 2 пин литртан иртнĕ. „Молодежная" йатла ĕне, 5 пăру амăшĕ, кăçал 2.400 литр сĕт панă. Унăн пĕр литр сĕт çинче 4,2 процент çу тухать.

* *

Йалхуçалăх выставки уçăлнă майĕпе районти йалхуçалăх ĕçĕнчи стахановецсемпе ударниксен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура 1937-мĕш çулти йалхуçалăх ĕçĕн итогĕсем çинчен сÿтсе-йаврĕç.

Канашлура, Çĕмерлĕ суйлав округĕ тăрăх ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат И. В. Новиков йулташ тухса сăмах каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче уйрăманах хаљхи вăхăтра пĕтĕм ĕçхалăхĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен—Аслă Совета суйлама хатĕрленесси çинчен тата хăйĕн автобиографийĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Унăн сăмахне пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

Х. Лисин.

Шупашкарта Киров йачĕпе тăракан шкулта пулса иртнĕ стариксемпе карчăксен суйлав умĕнхи канашлувĕнче Ирина Михайловна Пономарева сăмах калать.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Пурте ăмăртаç...

ТУРХАН. Липовкăри ... чĕпе тăракан алăста е... лекенсем суйлав кунн... сем тунипе кĕтсе ... неççĕ. Ертелте ... пĕр-пĕринпе ăм... ту хумĕ вăйла... стахановла ĕçл... ÿссех пырать. М... симова, Андрейев... йулташсем нормăна ... цент тултарса пыр... йулташ йулашки вă... ци пахалăхне нум... Унăн кашни кунах л... лă продукци пулать.

— Суйлав кунĕ—декабĕрĕн 12-мĕшĕ çывхарса килет. Епĕ асла Сталин йертсе пыракан çĕршывра ÿсе çитĕнтĕм. Халĕ тулли пурнăçпа пурăнатăп. Декабĕрĕн 12-мĕшĕ манăн савăнăçлă уйав пулса тăрать. Çав уйава епĕ хамăн нормăна 170 процентран кайа мар тултарса пыма тытăннипе кĕтсе илетĕп,—тет Воробйова йулташ.

Ертелти пур сменăсем те ăмăртăва тухрĕç.

И. Архипов.

Хĕрÿллĕн ĕçлеме пуçларĕç

ЙЕПРЕÇ. Районри нумай колхозсем Мускаври Сталин районĕнчи предприйатисенчи рабочисем чĕнсе каланине сÿтсе йавнă хыççăн, стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне хутшăнчĕç. „Хĕрлĕ металлист" колхоз членĕсем вунăкунлăх хушшинче 700 кубла метр вăрман касса хатĕрлеме, 750 кубла метр турттарма пулса, 15 çуран çынтан тата 12 лашапа ĕçлекентен бригадă организацилесе вăрманта ĕçлеме тытăнчĕç.

„Правда" колхозри колхозниксем хăйсен пухăвĕнче 4-мĕш кварталти вăрман хатĕрлев планне вунă кун хушшинче тултарма пулчĕç. Пайанхи куна ку колхозран вăрманта 6 лашапа ĕçлеççĕ. „Правда" колхоз Крупскайа йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Буинскинчи тата Кармаљти вăрманта йалан ĕçлекен рабочисем тата инженерла-техникла работниксем вунăкунлăхра 63 пин фесметр хатĕрлесе 46 пин фесметр турттарса кăларассишĕн кĕрешÿ пуçарса йачĕç. Социалисăмла ăмăрту сарăлсах пырать.

Г. Марÿшев.

Наградă илчĕç

ССР Союзĕн Çулйĕр халăх комиссарĕн политика йенĕпе ĕçлекен заместителĕ Йегоров йулташ 1937 çулхи нойаберĕн 11-мĕшĕнче 381/а номĕрлĕ приказ кăларнă. Приказ тăрăх пĕтĕм Союзри чукунçул строителствинче пулса иртнĕ стахановла вунăкунлăхра стахановлакривоносовла ĕçлекенсене „Ударнику сталинского призыва" значокпа 411 çынна наградăланă.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче ĕçлекенсенчен „Ударнику сталинского призыва" значока илме çак йулташсем тивĕçлĕ пулчĕç: А. Д. Гайдайев — „ЛК" екскаватор çинче ĕçлекенсен начаљникĕ; Г. Ш. Шарафутдинов—7-мĕш участкăри бетонщиксен бригадирĕ; А. М. Зайцев—„ЛК" екскаватор çинче ĕçлекенсен бригадирĕ; С. М. Тарасов—8-мĕш участкăри рељсăсем хывакансен бригадирĕ; Ф. К. Барабанов—„ЛК" екскаватор çинче ĕçлекен; М. А. ...лин—2-мĕш участкăри шофер.

Прок. Йаргуњкин.

Пољшăри ĕççыннисен нушипе правасăрлăхĕ

Çитсе килекен хĕл фашисла Пољшăн ĕççыннисемшĕн çĕнĕ йăвăрлăхсем илсе килет.

Пољшă рабочисен арăмĕсем, хăйсен мĕскĕн çурчĕсене хутса ăшăтас тесе, каллех урамсенче кăмрăк татăкĕсем пухса çÿреççĕ. Хваттерсĕр те çăкăрсăр тăрса йулнă çĕршер пин безработнăйсем умĕнче выçă вилес хăрушлăх тăрать. Пољшăн чухăн йалĕсенче çурмавыçă хресчен ачисем. çĕтĕк-çатăк тăхăнса йанăскерсем, ишĕлсе пыракан пÿртсенче шăнса чĕтресе ларасçĕ.

1937 ç. пуçламĕшĕнчех ĕçлев министерствин бÿджечĕ çинчен доклад тунă Томашкевич Пољшă çыннисен хăрушă пурнăçĕ çинчен сеймра çапла каланă:

„Çуралакансен шучĕпе халăх хутшăнса пырасси Пољшăра чакса пырать,—тенĕ вăл,—1930 çулта пин çын пуçне 17 çын çуралнă пулсан, 1935 çулта 12,1 çын кăна çуралнă. Халăх массисен сывлăхĕ мĕнлине пурте пĕлеççĕ. 70 пин çын туберкуљозпа вилнĕ, 300 пин çын туберкуљозпа (уçă формăпа) чирлет, пĕтĕмпе туберкуљозпа мĕлйун ытла çын чирлет...

Халăхăн апат-çимĕç йапах... Рабочин ернери вăтам ĕç укçи 26,15 злотых*) шутланать, çитменне рабочисен 43 процентĕ ернере 20 злотыхран та кайарах, 15 проц. кăна 40 злотых ĕçлесе илет. Чĕр...тавара ĕçлесе кăларакан шутра промышленнăçпа вăтам промышленнăçра ĕçлекен рабочисен 11,4 процентĕ 1935 çулти августра ернере 10 злотыхран та кайарах ĕçлесе илнĕ... Ĕç укçи малала чакса пырас туртăм палăрать. 1928 ç. пĕтĕм ĕç укçине 100 вырăнне йышăнсан, 1935 çулта вăл 49 кăна пулать... Çав вăхăтрах безработнăйсене памали пособи чакнă. Çавсене пула çынсем чирлесси ÿссе пырать, çураласси чаксах пырать, халăх цĕтсе тата мораљ тĕлĕшĕнчен пăсăлса пырать..."

1937 ç. малтанхи çурçулĕнче положени тата ытларах йапăхланнă. Официпоз „Газета польска", 1937 çулта çуралнисен, шучĕпе халăх йышĕ ÿсни çинчен кăçалхи октаберте малтанлăха тунă статистикă цифăрĕсене пичетлесе, мăшăрланасси тата çураласси чакса пынине, вилекенсем нумайланса пынине палăртать. Çуралнисен шучĕпе халăх йышĕ ÿсесси (пин çын пуçне) 10.5 таран чакнă.

Варшавăра рабочин ернери вăтам ĕç укçи 24—25 злотых таранра тытăнса тăрать пулсан, провинцире вăл унтан та сахалтарах. Рабочисен çемйисем выçăла-тутăла пурăнаççĕ.

„Украинские вісти" йатлă хаçат Љвоври рабочи (сезонник) çырнă çырăва пичетлесе кăларнă. Кил хуçи ернере 18 зл., унăн арăмĕ—15—20 зл. ĕçлесе илеççĕ, пĕтĕмпе—рабочи çемйин уйăхри бÿджечĕ—90 злотых. Хваттерĕшĕн, çуртшăн тата хутса ăшăтнăшăн тÿленĕ çĕре ĕç укçин виççĕмĕш пайĕ—32 злотых кайать.

„Ку вăл икĕ çынран тăракан рабочи çемйин бÿджечĕ,—тесе çырать хаçат,—анчах чи нумайĕшĕсем сахал. Пурринчен ытла çемйе пилĕк çынран тăрать. Вĕсем мĕнле пурăннине чухласа илме йăвăр мар! Ку ĕнтĕ çулла, ĕç пур чухне çавăн пек. Хĕлле ĕç пулмасть, çемйе хăйхи пимсĕр-мĕнсĕр тăрса йулать 26 ерне хушши ĕçленĕ пулсан йурать, мĕншĕн тесен вăл хĕл вăхăтĕнче безработицă йĕркипе мĕскĕн пособи илме права парать хăй".

Йал халăхĕ йаланах выçăлă-тутăлă пурăнса тинсе пынă пирки призывсен вăхăтĕнче йурăхсăр тенĕ сăлтавпа сара илменнисен хисепĕ калама çук хытă ÿссе пырать. Вакăран та вакă хуçалăхсенче хресчен çемйи мĕн çисе пурăнни çинчен нумайах та пулмасть тухнă кĕнекене рецензи паннинче „Полония" хаçат нойаберĕн 16-мĕшĕнче çапла çырать:

„Кусем чĕтрене йертекен цифрăсем. Пољшăн вакăран та вакă хуçалăхĕсенче çемйери пĕр член çулталăкне 2 килограмран та кайарах çу çийет, промышленнăç округĕсенче—аран-аран 1 кгр. Çĕрулми 250—316 кгр. ÿкет. Çапла вара, вакăран та вакă хуçалăхпа пурнакан хресчен,—çавăн пек хуçалăхсем Пољшăра чи пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ,—хăйне тата хăйĕн çемйине пуринчен ытла çĕрулмипе усрать. Çу, аш-какай тата сахăр мĕн чухлĕ çинине каламалăх та çук. Çапла илнĕ чухне çавăн пек резуљтатсем пулиннчен мĕн тĕлĕнмели пур ĕнтĕ".

„Наш прапор" хаçат (çентаберĕн 4-мĕшĕнче) Волыньпе Полесйери йалсенче потреблени чакса пыни çинчен хăй асăннинчен пĕрре те кайа мар хăрушă цифрăсем илсе кăтартать. 1929 çулпа танлаштарсан асăннă йалсенче сахăр илесси 93 проц., тăвар—87 проц., краçин—72 проц., кăмрăк—50 проц. чакнă.

„Вечур варшавски" хаçат çапла çырать:

„Чухăнланса кайнине пула хресчен економикăлă пурнăçа хутшăнма пăрахрĕ. Хресченĕн кирлĕ кĕпе-йĕм, сийелти тумтир, йалхуçалăх орудийĕ çук пулсан, вăл сахăр, супăњ т. ыт. илмест пулсан, ку ĕнтĕ унăн куљтурлăхĕ айалта тăнинчен мар, материаллă хатĕрсем çитменнинчен килет. Материаллă хатĕрсем çав тери сахал, тăрăнса пурнассинчен пуçне урăх нимĕн çинчен те шухăшламалли çук. Пăсна електричествă ĕмĕрĕнче, техникăлă процес тĕлĕнмеле хăвăртлăхсемпе аталанса пынă ĕмĕрте хресчен нимĕн тума çуккине пула çĕç вĕт сухапа çÿре патне таврăнать... Малала пырас вырăнне йал вăтăм ĕмĕр патне чакса пырать".

„Пољшă пресси, — хулара кăна мар, йалта та çынсем хăйсене хăйсем вĕлересси тăтăшах ÿссе пыни çинчен пĕлтерет. Çакă уйрăманах палла: пуринчен ытла çамрăксем хăйсем çине ал хураççĕ. Официаллă пĕлтернĕ тăрăх, 1936 çулта хăйсем çине ал хума тăни 4.415 пулнă, вĕсенчен 2.598 çын вилнĕ. Хăйсем çине ал хунин тĕп сăлтавĕ—чухăнлăх, безработицă. Хăйсене хăйсем вĕлернисенчен 50 проц. 30 çула çитиччен çамрăксем.

Пољшăн буржуалă економисĕсем шутланă тăрăх, Пољшăра безработнăйсен хисепĕ, вĕсен çемйисенчи членĕсене шутламасăр, мĕлйун çурă çынна çитет! Çав хушăрах Пољшă пресси регистрациленĕ безработнăйсен хисепне çеç уйăхран уйăха пичетлесе, обществăлă шухăша аташтарать (регистрациленĕ безработнăйсем нойаберĕн малтанхи çурурйăхĕнче 262 пин çын пулнă). Вăл çĕршер пин çын çинчен нимĕн те шарламасть. Вĕсене, „Работник" каланă тăрăх, „официаллă спискăсенчен, çавăнпа пĕрлех чĕрриссен спискисем çинчен те хура...а парахнă". Правителствă, „конйунктура тĕрĕлнĕ май", малашне безработицă чакмала, тесе оптимисла ĕнентерсе каланине пăхмасăр, безработнăйсен хисепĕ тăтăшах ÿссе пырать. Тепĕр йенчен, йал халăхĕ пăвă пурăнни фашисла Пољшă условийĕсенче татса пама май çук проблемă пулса тăрать. Унта, хăшпĕр економиссем шутласа пăхнă тăрăх, 8 мĕлйунран пуçласа 9 мĕлйун тарана „ытлашши" халăх пурăнать: çав халăх йалта тăранса пурăнма пултараймасть.

Пуçпулса тăракан лагерпе унăн типшĕм хăрăк ачийĕ—„нацилĕ пĕрлешÿ лагерĕ" çĕршыва шалти хирĕçÿсен лачакинчен туртса кăларма пултарайманни тата економикăлă йăвăрлăхсене айа тума пултарайманни уйăхран уйăха ытларах та ытларах уççăн паллă пулса пырать. Станинский-Студницкий процесĕ правителствă аппарачĕ мораљ тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнине уçса палăртса, фашисла диктатурă режимĕн усал шăршлă вăрттăнлăхне витсе тăракан каркăча усрĕ.

„Епĕр сĕрсе пыракан вилĕн усал шăршипе сарăлнă атмосферăра пурăнатпăр. Ăна нимĕнле фимиамăпа та çĕрĕсрен упрама та, чĕртме те май çук. Епĕр наркăмăшланă сывлăшпа сывлатпăр..."

Çавна Пољшăн паллă публицисĕ Свентоховский 1937 ç. çентаберте, Станинский-Студницкий процесĕ пуçланиччен малтан, „Полонця" хаçатра çырнă. 1937 çулхин нумай пулмасть пичетлесе кăларнă „Пĕчĕк статистикăлă çулсеренлĕхе" илсе кăтартса, Свентоховский çавнă пуçпулса тăракан лагер „аслă та хăватлă Пољшă" çинчен калакан вĕскĕн сăмахсене хирĕç тăратать.

„Пољшă, — тесе çырать Свентоховский, — промышленнăç продукци, електроенергипе усă курас, автомобилсен шучĕ, бољницăсенчи койкăсен шучĕ, врачсен шучĕ йенчен илсен, куљтурлă халăхсем хушшинче чи йулашки вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăрать.

Анчах та хăшпĕр облăçсенче епĕр пĕррремĕш вырăнта тăратпăр. Епĕр никамран та нумай çĕрулми çийетпĕр. Пирĕн патăрта туберкуљозпа нистинчен нумай вилеççĕ: 10.000 çын пуçне 17.6 çын (Голландире—4.5!)... Йевропă пирĕнтен купăста йашки, бигăс та та пончиксем пĕçерме вĕрентет пулсан, пирĕн промышленнăçа цурпинчен ытла йутçĕршывсем тытса тăраççĕ пулсан, пирĕн хутла пĕлменнисем 5 мĕлйун çын тата 500 пин ача ваљљи шкулсем çук пулсан (йулашки вăхăтра ку цифра мĕлйун патне капашать), политикăлă фанфаронсем ăнлантарса пачăр пире: вĕсем мĕнрен „хăватлă Пољшă", „тĕнчипе паллă вырăн" йышăнса тăрас Пољшă тума шутлаççĕ?

Усал чĕлхесем Пољшăра „7" цифра паллипе („ан вăрла" текен ҫиччĕмĕш заповĕде май) çĕнĕ ордĕне ĕçе кĕртме сĕнеççĕ, тесе калать Свентоховский. Вăл „Голос народа" хаçатран çакна илсе кăтартать:

„Пољшăра унтала та кунтала та вăрлаççĕ. Кирек ăçта пăхсан та—пур çĕрте те иртĕхеççĕ. Государствă учрежденийĕсенче, самоуправлени органĕсенче, обществăлă организацисенче, уйрăм харпăрлă предприйатисенче тăвакан растратăсем — вĕсем кулленех пулса пыракан йапаласем".

Свентоховский Пољ... çĕр те тĕксĕм кар...

Фашисла П... правасăрлăх... патне ç... тата...

(„Пра...

*) 100 злотых—100,37 тенкĕ.

Совет халăхӗ çӗршывăн чи лайăх çыннисемшӗн сасăлать

...овет Сойузӗнчи халăхсем ...ӗн Аслă Советне суй... ...лӗ куна политикăла ...хатӗрленеççӗ. Со... ...боլшевикла парти ...уçӗ Сталин йулташ ...еççе тăракан ӗççын... ...ан чи лайăх çынни... ...и тата партире тăман ...че, Сойуз Советне та... ...наççен Советне депу... ...кандидата палăртрĕç ...узен Аслă Советне де... ...амали округсенчи суй... ...лав комиççийӗсем регистрацилене кандидатсемшӗн агитацилесси пӗтӗм çӗршывра анлăн сарăлчӗ. Суйлав умӗнхи массăлă пухусенче тухса каласа, ССР Сойузӗн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем хăйсем çинчен, хăйсен пурнăçӗпе ӗçӗсем çинчен каласа параççӗ, Ленинăн—Сталинăн аслă ӗçӗшӗн тивӗçлӗн кӗрешсе пыма пулаççӗ.

Декабӗрӗн 3-мӗшӗнче, Ленинградра, çамрăксен суйлав умӗнхи пухувӗсем пысăк çӗкленӳпе иртнӗ. Пухусенче суйлавçăсем пурӗ 275 пин çын пулнă.

Çамрăк суйлавçăсем советлă тăван çӗршывшăн, коммунисла партишӗн, çамрăксен йуратнă тусӗ тата учителӗ—Иосиф Виссарионович Сталиншăн пӗтӗм чӗререн тăни çинчен калаççӗ. Митингра тухса каланисем пурте:—Çамрăк суйлавçăсем декабӗрӗн вуниккӗмӗшӗнче хăйсен сасӗсене социалисăмла тăван çӗршывăн шанчăклă ывăлӗсемшӗн, коммунисăмшăн хăватлă кӗрешекен борецсемшӗн—ССР Сойузӗн Аслă Советне депутата суйланма Ленинградра баллотировкăна тăракан кандидатсемшӗн—Калинин, Жданов, Литвинов йулташсемшӗн паратпăр,—тенӗ.

Çамрăк суйлавçăсен пухувӗсем халăхсен çулпуçӗ Сталин йулташ патне, Калинин йулташ патне тата Ленинград боլшевикӗсен руководителӗ Жданов йулташ патне салам йама пурте пӗр хаваслăн йышăннă.

Новочеркасск хулинчи Буденный йачӗпе тăракан локомотивсем тăвакан заводăн паровоз цехӗн пит пысăк çуртӗнче рабочисем, специалиссем тата служăщчисем 1.500 çын пуханнă. Ку пухура суйлавçăсем хăйсен Сойуз Советне депутата суйламали кандидачӗпе—паллă совет писателӗ Михаил Шолоховпа тӗл пулнă.

„Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче,—тенӗ митингра Шолохов йулташ,—пӗтӗм совет халăхӗ лайăхран та лайăх çынсемшӗн, боլшевикла партин ӗçӗшӗн, коммунисăм ӗçӗшӗн вӗçне çитиччен тăракан çынсемшӗн сасăлать. ССР Сойузӗн Аслă Советӗн суйлавӗ совет халăхӗ коммунисла парти тавра, халăхсен çулпуçӗ Сталин йулташ (алă çупаççӗ) тавра тачă пӗтӗççе тăвине кăтартса парӗ. Пирӗн çулпуçӗ Сталин йулташ çине пӗтӗм çӗр чăмăрӗ çинчи ӗççыннисем йуратупа тата шанчăкпа пăхса тăраççӗ".

(ТАСС).

Н. М. Шверник йулташ хăйӗн суйлавçисем патӗнче

Свердловска Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн секретарӗ Н. М. Шверник йулташ пынă. Вăл Свердловскри предприйатисенчи рабочисен суйлав умӗнхи пухувӗсенче тухса каланă. Свердловскри ӗççыннисем Националънăççен Советне депутата суйлама кандидата палăртнă Николай Михайловича питӗ ăшшăн кӗтсе илнӗ.

„Çирӗм çул хушшинче пирӗн тăван çӗршыв паллама çук улшăнса çӗнелчӗ,—тенӗ Шверник йулташ Уралтурбоэльмашстрой рабочийӗсемпе служащисен суйлав умӗнхи пухувӗнче. — Пирӗн çӗнтерӳсен итогне ССР Сойузӗн Конституцийӗнче аслă Сталинăн аллипе ылтăн саспаллисемпе çырса хунă.

Сталинла пйатилеткăсем ӗççыннисене валъли телейлӗ те хаваслă пурăнăç туса пачӗç. Германире фашисла четырехлеткăсем выçлăх, çуклăх, безработицă кӳреççӗ. Фашисла пуçлăхсем хăйсен чухăн запасӗсене перекетлес тесе тем тӗрлӗ чейе-киревсӗр мелсемпе те хăтланаççӗ.

Геринг приказӗ тăрăх халăха çемçе çăкăр сутма чарнă. Типсе кайнă—пӗçернӗ хыççăн виçӗ кун выртнă çăкăр сутма çеç ирӗк панă. Фашиссемшӗн çемçе çăкăр сутни усăллă мар. Çемçе çăкăрăн тути лайăхрах, ăна ытларах çиме пулать. Çаванпа фашиссем халăха тип çăкăр çеç çитермеле тунă. Çав приказа пăсакансене арӗслеççӗ. Геринг, тепӗр приказӗ тăрăх, хӗрарăмсене кӗпе çунă хыççăн супăнлӗ шыва канализацине тăкма хытарсах чарнă. Çав шыва уйрăм посудăна пуçтармала мӗн, вара предприйатисен представителӗсене памала,—лешсен вара çав шывран çусене тытса, каллех супăнъ тумала. Çав постановленине пăсакансене те арӗслеççӗ. Акă мӗнле „ырлăхсем" парать фашисăм Германири ӗççыннисене!

Капиталисăмла тӗнче тата уйрăмах фашисăм пире тискерлех курайманççӗ. Çавсем ӗнтӗ пирӗн çӗр шыва диверсантсене, сăтăрçăсене, шпионсене йараççӗ. Çавсем ӗнтӗ рабочисемпе колхозниксен майӗ çине капиталисăм майкăчне тăхăнтарасшăн. Çавна вӗсем тăваймӗç! Епӗр, троцкисла-бухаринла бандитсене, шпионсене тата диверсантсене пӗри те йулмиччен тытса пӗтерӗпӗр, социалисăмлă çӗршывăн ӗççыннисене хирӗç йунлă алă çӗклеме хăйакансене пурне те тӗп тăвăпăр.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче Совет Сойузӗнчи ӗççыннисем пӗтӗм тӗнче умӗнче—çӗнтернӗ халăхӗн социалисăмла çӗнтерӳвӗсене çирӗплетсе пынине, пирӗн çӗршывра советлă, социалисăмлă демократисăм пурнăçа кӗрсе пынине кăтартса параççӗ. Çав кун мӗлйуншар суйлавçăсем урнăсем патне—хăйсен сасӗсене çӗршыва тытса пыма шанакан çынсемшӗн пама, хамăрăн партийе тата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа пӗтӗм чӗререн йуратнине кăтартса пама пыраççӗ".

(ТАСС).

Л. М. Кагановичшăн питӗ пысăк хаваслăхпа сасăлатпăр

Ташкент-Ленински суйлав округне кӗрекен Чирчикстройри херарăм-суйлавçăсен суйлав умӗнхи пухувӗнче Илйина йулташ сăмах тухса каланă:

— Хӗрарăм йулташсем,—тенӗ вăл,—Аслă Сталинăн тӳрӗ ученикӗ, чукунçул транспортне кӗске вăхăтрах малала йама пултарнă руководителъ, халӗ йăвăр промышленнăçа йертсе пыракан Лазар Моисейевич Каганович пирӗн суйлав округӗнче баллотировкăра тăма килӗшӳ панине пӗлсен епӗ чиксӗр савăнтăм. Епӗ Лазар Моисейевича курнă, курнă анчах та мар, унпа темиçе хут та калаçнă.

Каганович йулташ рабочисем мӗн ыйтнине питӗ сисет. Хаլхи пекех астăватăп, 1934 çулта Каганович йулташ Горькири Молотов йачӗпе тăракан автозавода пычӗ. Епӗ вăл вăхăтра унта краповожатăйра ӗçлеттӗм. Лазар Моисейевич директор кабинетне мар, цехсене, рабочисем патне кайрӗ. Вăл рабочисенчен ӗçри, куլтурăлă канури йӗркесем çинчен ыйтса пӗлчӗ. Вăл пӗр рабочи патне пычӗ те, унран:—ӗççем мӗнле пыраççӗ, ӗç ăнать и?—тесе ыйтрӗ.

Вăл ăна хирӗç:—пурте лайăх, семйере кăна йӗркелех мар. Арăм канура, ача чирлӗ,—терӗ.

Çав кунах чирлӗ ачана пăхма врач çирӗплетсе панă. Сталинла Нарком çынсемшӗн ывăнмасăр тăрăшать. Епӗ уншăн хам сасăна питӗ пысăк хаваслăхпа паратăп.

(ТАСС).

Писателсен Сойузӗн правленинче

Чăваш совет Сойузӗн писателӗсен правленийӗ хăйӗн декабӗрӗн 1-мӗшӗнче пулса иртнӗ ларăвӗнче писателсене йертсе пырас ӗçе йапăх илсе пынăшăн, Кинохроникăра управлйайушчи пулса ӗçленӗ чух унти работниксемпе час-часах ӗçкӗ туса Кинохроникă ӗçне пит йапăхлантарса йанăшăн Мраъкана правлени председателӗнчен кăларчӗ.

Çак ларурах правлени Полорусов-Шелепи „Чăваш халăх поечӗ" йатне тивӗççӗр илнӗ, вăл йата Шелепине халăх тăшманӗсем—Данилов, Кузнецов, Токсин, Никитин т. ыт. пана терӗ. Ку ыйтăва татса пама ЧАССР ХКС умне лартас, Шелепине вăл йулашки çулсенче совет влаçӗ платформи çинче тăрса чылай лайăх произведенисем панине тата вăл хăйӗн йанăшӗсене йышăннине шута илсе, Чăваш совет писателӗсен Сойузӗн членӗнче хăварса, ăна литературăра ӗçлеме май парас тесе йышăнчӗ.

Столовăй-ресторан

...ӗн центрӗнче пӗчӗк ...ырăнне çӗнӗ сто... ...лартрӗç. Сто... ...та, шалтан ...ем çумне шпалерсем çапнă. Сӗтелсем çине чечексем лартнă.

Апат çиме пыракан çынна официанткăсем лайăх пăхаççӗ.

Ив. Кутузов.

Выլăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçри тăшмансем совет сучӗ умӗнче

Декабӗрӗн 3-мӗшӗнчи ирхи тата каçхи ларусем

Специаլнăй Коллеги председателӗ Семенов йулташ суд ларуне малала тăсни çинчен пӗлтерет.

Айăпланакан Орловран допрос тума пуçлаççӗ. Çав, псаломщик ывăлӗ, Орлов 1919 çулта Хусанти ветеринари институтӗнчен вӗренсе тухнă. 1920 çултанпа пӗр улшăнмасăр Сӗнтӗрвăрри районӗнче ветеринари врачӗ пулса ӗçленӗ.

Орлов суд умӗнче шывран типӗле тухма тапаçланать. Анчах ӗç тухмасть. Орлов тунă сăтăрлă ӗçсем пит те пысăк. Судпа прокурор умӗнче сăтăрлă ӗççене нийепле те пытарма çук.

Орлов Çӗрӗç халăх комиссариачӗн Ветеринари управлени начаլникӗ пулнă—Михопаркин сăтăрçăпа туслă пурăннă.

1936 çулхи апрел уйăхӗнче фермă валъли Богородск районӗнчен 20 пăру, 2 вăкăр илсе килнӗ. Инструкци тăрăх, йутран кӳрсе килнӗ выլăхсене обйазателнă йӗркепе йун тӗрӗслесе пăхмала, карантинра тытса усрамала. Орлов çак йӗркене пӗлетăркачах инструкцине пăхăнман. Орлов фермăра сикекен чир пуррине те 1933 çултах пӗлнӗ. Анчах ăна пӗтерсе лартма тăрăшман. Унтан та ытларах. Сикекен чирпе чирленӗ выլăхсене сывă выլăхсемпе пӗр кӗтӳре çӳретме хушнă. Сиплемели препаратсене çулталăк çурă хушши никама кăтартмасăр пытарса усранă. Фермăри чирлӗ выլăхсене сиплес вырăнне, Орлов чирлисене пурне те пусса пӗтерме хушнă. Орлов кашни „сиплемессерен" выլăхсем татах та ытларах аптрама пуçланă, ку вăл йурийех сăтăр тăвас тесе йурăхсăр медикаментсемпе сипленинчен килнӗ. Çакăн хыççăн фермăри выլăхсем массăлăн чирлеме пуçланă, 32 ӗне хырăм пăрахнă. Сӗтçу фермисӗр пуçне, колхозниксемпе йединоличниксен ӗнисем те нумай чирленӗ.

Орлов сысна чирӗпе те кӗрешмен. Сыснасем вилсен вăл „сысна фермин усси çук" текен „теори" сарнă. Вăл колхозниксенчен взйаткă илнӗ.

Çак фактсем ӗнтӗ пурте айăпланакан Орловăн сăтăрлă сăн-сăпатне кăтартса параççӗ.

* * *

Суд сӗтелли умне тепӗр сăтăрçă—айăпланакан Семйагин тухса тăрать.

Семйагина Чăваш республикине Михопаркин чӗнсе илнӗ. Сăтăрçă сăтăрçăна инçетренех курнă!

Семйагин та, ытти айăпланакансем пекех, хăйӗн сăтăрлă ӗçне йышанасшăн мар. Анчах суд председателӗпе прокурор ыйтусене çирӗппӗн лартсан, Семйагин темле авкаланса хуçкалансан та, унăн сăтăрлă ӗçӗсем тăрă шыв çине тухаççӗ.

Семйагин — совета хирӗçле, пăсăлса кайнă елемент, ăна 1934 çулта парти членӗнчен кăларса сирпӗтнӗ. Тутаркас районӗнче ветеринари врачӗ пулса çулталăкка йахăн ӗçленӗ. Çав хушăра вăл ветеринари ӗçне йăлтах аркатса йанă. Выլăхсен сикекен хăрушă чирӗсемпе кӗрешмен çеç те мар, тата çав чирсене йурийех сарса пурăннă. Районта выլăх çăвисем пулман. Епизотилӗ чирсемпе кӗрешем пекки туса, сывă выլăхсене йурăхсăр, кивелсе срукран тухнă вакцинăпа прививкă тунă. Çакăн хыççăн выլăхсем тата ытларах чирлесе вилме пуçланă. Çав вăхăтрах чăн-чăн чир йăвисене тӗкӗнмесӗр сыхласа усранă.

Райçӗрӗç пайӗ Семйагина Канаша йутран кӳрсе килнӗ выլăхсем илме йанă. Анчах Семйагин Шупашкара çитнӗ те, Канаша кайман, Тутаркас районне кайала тухса шăваннă. Çапла тунипе район валъли ăратлă выլăхсем илсе килес плана аркатнă. Колхозсене тухсан Семйагин вӗçӗмсӗр ӳсӗр çӳренӗ, колхоз хӗрӗсенчен мăшкăланă. Семйагинăн пӳтсӗр ӗçӗсем çинчен питӗ нумай жалăбăсем пулнă.

Семйагин совета хирӗçле контрреволюцилӗ агитаци сарнă. Суд кун çинчен хупă ларура пăхса тухма йышăнать.

* * *

Йулашкинчен, айăпланакан Михопаркинран допрос пуçланать.

Вăл кивӗ çарта прапорщик пулнă. Аслă пиччӗшӗ пуп пулса ӗçлет.

Михопаркин—опытлă сăтăрçă. Суд унăн сăтăрлă ӗçӗсене кăтартса парсан, вăл йаланах: „Куншăн районсенчи ветеринари врачӗсем айăплă, ку—асăрхамасăр пулнă йăнăш" тесе пӗтӗм айăпа хăйӗн çинчен сиресшӗн. Анчах фактсем—тӳрӗ йапала. Фактсем пӗтӗмпех Михопаркина хирӗç тăраççӗ.

Акă 1933—34 çулсенче Çӗрӗç халăх комиссариачӗн ветеринари бактериологилӗ лаборатори работникӗсем—Филиппов т. ыт. 26 колхозри ӗнесене тӗрӗсленӗ. Тӗрӗсленӗ хыççăн сикекен чир нумай сарăлни палăрнă. Тӗрӗслӳ резуլтачӗсем çинчен кашни район тăрăх Михопаркина отчот тăратнă. Çав отчота Михопаркин никама кăтартмасăр йурийех пытарса усранă, ăна кăçал çулла ăнсăртран тупса палăртнă.

Правителствă йышăннă тăрăх, 1937 çулхи апрелӗн 1-мӗш тӗлнӗ республикăра 6 пункт уçмала пулнă. Укçа-тенкӗ пур çинчех Михопаркин строителствăна йурийех вăраха йарса пынă. Çавăн пекех асколизаци камерине те тумасăр тытса тăнă. Чирлӗ выլăхсенчен сӳсе илнӗ тир склачӗсем тырпул склачӗсемпе, çынсем пурăнакан çуртсемпе йунашар пулнă. Çитменнине, складсем çав тери йапăхса кайнă, изоլаци туман. Çав складсенчи чир çынсем çине те çăмăллăнах йерме пултарнă.

Республикă тулашӗнчен кӳрсе килекен выլăхсене чир-чӗр йенчен тӗрӗслемесӗрех, карантинра тытса усрамасăрах фермăсене салатнă. Сăтăрçăсем йури çавăн пек тунă. Вӗсем хăйсен умне республикăри выլăх-чӗрлӗхе вӗлерсе пӗтерес, колхоз стройне хавшатас задача лартнă. Вӗсем хăйсен тӗллевне пурнăçа кӗртме пуçланă та: республикăра выլăхсем çулран çул ытларах вилнӗ.

Михопаркин, Çӗрпӳри сăтăрçăсен ушкăнне йертсе пынă. Çӗрпӳри сăтăрçăсене вăл:—пирӗн ӗçе сăнаса тăраççӗ, çавăнпа та асăрханарах хăтланас пулать,—тесе вӗрентнӗ.

Чир сарма пултаракан, срукран тухнă медикаментсене Михопаркин 1928 çултанпа сыхласа усранă. Çав медикаментсемпе прививкă туса сывă выլăхсенех чир йертнӗ.

Колхозсенче выլăхсем вилнӗшӗн, кӗсресем хăм пăрахнăшăн Михопаркин колхозсене айăпланă. Шупашкарти ветеринари лаборатори работникӗ Тимофейев йулташ республикăра йерекен чирсем сарăлнине кăтартакан карттă тума пуçланă. Михопаркин çавăн пек карттă тума чарнă. Мӗншӗнни паллă ӗнтӗ: карттă çине пăхсан сăтăрçăсен ӗçӗ куçа тӳрех курăнса кайать!

Михопаркин тăрăшнипе республикăра аш-какай продукцисене ветеринари санитарийӗ йенчен тӗрӗслес ӗçе аркатса йанă. Аш-какай тӗрӗслемели станцисене ветеринари лечебницисем ăшне вырнаçтарнă. Кунта сывă выլăх какайне те чир йернӗ. Какай урлă çынсем те чирленӗ.

* * *

Каçхи ларура суд свидетелсем кăтартса панине итлеме пуçлать. Ӗç тăрăх пӗтӗмпе 45 свидетел чӗннӗ.

Свидетел М. В. Сидоров (Шăмăршă райçӗрӗç пайӗн пуçлахӗ) Çӗрӗç халăх комиссариатӗнчи сăтăрçăсем „Трактор" колхозпа „Труженик" колхозри сысна фермисене пӗтерсе лартни çинчен калать.

„Трактор" колхоз ферминче 150 сысна пулнă. „Племзаготконторă" фермăна 26 пуç „импортлă" сысна амисем илсе пынă.

— Пӗтӗм республикăна ăратлă сысна тăратма пуçлатпăр,—тенӗ вӗсем. Фермăри сыснасене сутса пӗтӗрнӗ. Анчах Литваран туйаннă сыснасен ăратлăх свидетелстви пулмен пирки, колхоза аш-какай обйазателствинчен хăтарман. 1937 çулта „Трактор" колхозăн государствăна 46 центнер аш-какай памала, çав вăхăтрах фермăра пӗтӗмпе те 26 сысна ами анчах. Фермăна пуçӗлех пӗтерсе лартас мар тесен, обйазателствăна пасартан какай илсе панипе тултарма тивет.

Свидетел кăтартнă тăрăх, „Племзаготконторă" управлйайушчийӗ пулнă Шулов „импортлă" сыснасем ăратсăр пулнине пӗлнӗ, çавăнпа свидетелствă паман. Райçӗрӗç пайӗнчен ăратлăх свидетелстви ыйтма килсен:

— Епӗ торгаш мар, колхозран укçа илнӗ—çитет, манран нимӗн те ан ыйтăр,—тесе кăларса йанă Шулов сăтăрçă.

„Импортлă" сыснасем фермăна илсе пырсанах (1936 çулта кӗркунне) 3—4 пăт йăвăрӗш пулнă. Унтанпа çулталăк иртнӗ. „Виçӗ уйăхри çурăсем" тесе суйнă сыснасем çулталăк хушшинче нимӗн чухлӗ те ӳсмен. Пӗрремӗш хут çуралаÑа парсан, кашни амаран 3—4 çурă кăна тухнă. Сысна çурисем çав тери имшер, чирлӗ пек ӗнтӗркесе çӳренӗ.

„Труженик" колхозра та çавăн пекех пулнă.

Выլăх-чӗрлӗх управленийӗпе „Племзаготконторă" колхозниксене куçа-кӗретӗнех улталанă. Сăтăрçăсем колхозниксене совет влаçне хирӗç тăратасшăн пулнă.

Выլăх ăрачӗсене хутшăнтарса йарас тесе, сăтăрçăсем пӗр колхозах темиçе тӗрлӗ ăратлă такасем йанă. „1-мӗш Май" колхозра, сăмахран, Рамбуլйе, выранти Меринос, Гемпшир ăратлă такасем пур.

Малала свидетел Сидоров, выլăх чирӗпе кӗрешнӗ çӗрте Ветеринари управленийӗ нимӗн те пулăшманни çинчен калать. — Кăçал районра хăрушă чир сарăлсан, чирпе кӗрешес вăхăтра ветеринари врачне йурийех Ленинграда курса вӗрентме йанă,—тет вăл.

* * *

Айăпланакансем хăйсен сăтăрлă ӗçӗсене судран пытарасшăн пулсан та, свидетелсем вӗсене таткăлă фактсемпе тăрă шыв çине кăлараççӗ.

С. Константинов.

Ответлă редактăр заместителӗ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Осоавиахимăн дегазаци отрйачӗсен Чăваш республикӗнчи уйрăм взвочӗ

1938 çулта çак ӗççене тума

ДОГОВОР ТĂВАТЬ

1. Дегазаци тума (сăтăрçăсемпе кӗрешесси),
2. Пурăнмали çуртсене газлă тата нӳрлӗ дезинсекци тума (хурткăпшанкăсене пӗтерме),
3. Садсене тата пахчасене емел сапма,
4. Йăвăççене хурт çийесрен емеллеме,
5. Кӗлетсемпе складсенчи йалхуçалăх çимеçӗсен сăтăрçисемпе чирӗсене газлă тата нӳрлӗ майпа пӗтерме т. ы. те.

Адрӗс çапла: Шупашкар хули, Осоавиахим Тӗп Совечӗ, Дегазаци взвочӗ.

Дегазаци отделенийӗсем çак районсенче пур: КАНАШ, УЛАТĂР, ÇӖМӖРЛЕ (Осоавиахим районри совечӗсем çумӗнче).

Осоавиахимăн дегазаци отрйачӗсен Чăваш республикӗнчи взвочӗ.

Чăваш республикинчи Сывлăха сыхлав халăх комиссариачӗн дезинфекци тăвакан тӗп станцийӗ учреждениесемпе, предприйатисемпе, заведенисемпе тата ытти организацисемпе

ПУРИНПЕ ТЕ

1937 çулхи декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуçласа 31-мӗшне çитиччен 1938 çулта профилактикăлă санобработкă, дезинфекци тума тата хлор сапма

ДОГОВОР ТĂВАТЬ

Адрес: Ново-Поперечная урамӗ (Киров шкулӗпе йунăшар). Çак срук иртсен договор туман организацисенче санобработкă тата дезинфекци тума йышăнмасть.

Дирекци.

3—1

ЧĂВАШСЕН КОММУНИСЛА ЙАЛХУÇАЛĂХ ШКУЛНЕ
Машинистка, библиотекар, счетовод-кассир тата буфетчица

КИРЛӖ

Адрес: Ленинградская урам, 3
РЕКТОРАТ.

„РОССНАБФИЛЬМ" трестăн Чăваш кантурӗ

Чăваш АСС Республикӗнчи кино-театрсен екранӗсем çине кăларать:

Саслă филъм

„Доклад товарища Сталина И. В. о проекте Конституции на VIII-м Всесоюзном С'езде Советов 25 ноября 1936 года"

Çӗнӗ саслă филъм

ЙУРĂ ПОЕМА

„КОЛЫБЕЛЬНАЯ"

„Сойузкинохроникăн" Мускаври студийӗ тунă.
Автор режиссер ДЗИГА ВЕРТОВ.
Композиторсем—Даниил тата Дмитрий Покрасс.
Йуррине поет-орденоносец Лебедев-Кумач çырнă.

Выранти кино-театрсенче хăçан кăтартассине хаçатсем çинче пичетленине тата радио тăрăх пӗлтернисене асăрхăр!

„РОССНАБФИЛЬМ"

2—1

Националънăççен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийӗ

ПӖЛТЕРНИ

Националънăççен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийӗн адрӗсӗ çапла:

Шупашкар хули, Чувашская урам, 6-мӗш № çурт (Ӗçтăвакан Тӗп Комитетпа Халăх Комиссарӗсен Совечӗн çурчӗ).

ТЕЛЕФОНÇЕМ:

Председателӗн—6—59, 5—31 тата 5—24.
Секретарӗн—5—24 тата 0—02.
Ответлă исполнителсен—0—66 тата 0—55.

Лаша çухалнă

тӗсӗ хура-турă, кайри сулахай ури пакăлчак таран шурă, çилхи сылтăм йенче, „Мартышка" йатлă. Пӗлекенсем çак адрӗспе пӗлтермеле: Шупашкар хули, Кировски посолок, Толъман урамӗ. 30, Петр Семенович Епишкин.

Лаша тытнă

кӗсре, тӗсӗ-çӳрен, çамки тăрăх шурă, çилхи сылтăм йенеле. Çӳллӗш вăтам.
Çак адреспе пымала: ТРАК РАЙОНӖ, „ИСАКОВО" колхоз.

ШУПАШКАРТИ „БАКАЛЕЯ" МАГАЗИННЕ
ИКӖ БУХГАЛТЕР КИРЛӖ.
Ӗçукçи килӗшӳ тăрăх.
Телефон № № 1-77.

СОЙУЗОРГУЧОТĂН

Горькинчи учотпа економикăлă вӗренӳ комбиначӗн

Чăваш республикинчи филиалӗ

(адрӗсӗ: Шупашкар хули, Канаш урамӗ, 18)

БУХГАЛТЕРСЕН КУРСНЕ

вӗренме илесси çинчен пӗлтерет, курсра производствăран татăлса вӗренмеле, вӗренсе тухнă хыççăн Чăваш АСС Республикинчи районсенчи хуçалăхлă организацисенче ӗçлеме кайаççӗ.

Курса çичӗ çултан кайа мар вӗреннисене тата счетоводствăн двойной системи тăрăх пӗр çултан кайа мар ӗçленисене илеççӗ.

Курса вӗренме кӗрес текенсен 1937 çулхи декабӗрӗн 20-мӗшчен çакăн пек документсем тăратмала:

1. Анкетăпа зайавлени.
2. Вӗренни çинчен справкă.
3. Счетоводствăпа ӗçленӗ стаж çинчен справкă.
4. Сывлăх çинчен справкă.
5. Икӗ фото картăчкă.
6. 20 пуслăх икӗ почтă марки.

Курсра вӗренме суйласа илнӗ çынсене уйрăмăн пӗлтерсе Шупашкар хулине чӗнеççӗ, унта çичӗ çул вӗренмели шкул программипе политграмăтă, математикă тата вырăс чӗлхи тăрăх, çавăн пекех бухгалтӗрла учот никӗсӗсем тăрăх испытанисем тытмала.

Курсра вӗренме илнӗ çынсене общежити тата стипенди пулать.

Кунсăр пуçне тата учот работникӗсем: бухгалтерсем, счетоводсем, статистиксем хатӗрлес, вӗсен квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе курссемпе семинарсем иртерме хуçалăхлă организацисенчен зайавкăсем йышăнать.

3—2

„Чăваш Коммунӗ" çырăнса илмелли хакӗсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвӗсене кайала памаççӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 931. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2970. Тираж 13964. 56—92 см. 1—1 п. л.